Чебоксары Ц. Б. им. Горького О

Пӗтӗм тӗнчери пролетарисем, пӗрлешӗр!

1938 февралӗн 6 вырсарникун 30 (4843)-мӗш №

ЧӐВАШ КОММУНӖ

20-мӗш ҫул тухать ● ПСК(б)П Чӑваш Обкомӗпе Тӗпӗҫтӑвкомӗн хаҫачӗ ● Пӗр №-рӗ 10 пус.

РЕДАКЦИПЕ КАНТУР АДРЕСӖ: Город Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом Печати

ТЕЛЕФОНСЕМ: Редакторӑн 0—67, Ред. заместителӗн 0—88, Редакци секретарӗн 4—40, Дежурнӑйӑн 6—23

Куллен кирлӗ таварсем ытларах кӑлармала

Пирӗн социализм ҫӗнтерни ҫӗршывра ӗҫҫыннисен материаллӑ пурнӑҫӗпе культурлӑхӗ ҫулран ҫулах пысӑккӑн ӳссе пырать. Социализмӑн пархатарлӑ, чаплӑ тивлечӗсене кашни ӗҫҫынни хӑйӗн кулленхи пурнӑҫӗнче курать. Совет ӗҫҫыннисем тутлӑ апат-ҫимӗҫ ҫисе пурӑнаҫҫӗ, лайӑх та илемлӗ тумтирсем тӑхӑнса ҫӳреҫҫӗ. Ӗҫҫыннисем хушшинче ӗҫпе вӗренӳ ҫине ҫӗнӗле пӑхасси хӑвӑртӑн ҫӗкленипе пӗрлех вӗсен культурӑлӑхӗ те ӳссех пырать.

Рабочисемпе служащисен ӗҫ укҫи хисепӗ, колхозниксен тупӑшӗ пӗрмаях ӳсни, куллен кирлӗ таварсен хакне йӳнетсех пыни,—ҫаксем пурте ӗҫҫыннисен таварсем илес пултарулӑхне вӑйлӑн ҫӗклеҫҫӗ. Иккӗмӗш пиатилеткӑн малтанхи тӑватӑ ҫулӗ хушшинче республикӑре тавар ҫаврӑнӑшӗ, 1932 ҫулхипе танлаштарсан, 2,4 хут ӳснӗ. Ӗҫҫыннисен тавар илес пултарулӑхӗ малашне те ӳссех пырӗ,—ҫакӑн пек социализм тивлечӗ, ҫакӑн пек Ленин—Сталин партийӗ тата совет власҫӗ туса панӑ тивлет.

Пирӗн республикӑре халӑх хуҫалӑхӗпе пӗрлех вырӑнти, апат-ҫимӗҫ промышленноҫӗсем тата промысла кооперацисен йенӗпе куллен кирлӗ таварсем кӑларасси те ӳсет. Чӑвашпромсоюз системи 1932 ҫулта куллен кирлӗ таварсем 5581,9 пин тенкӗлӗх кӑларнӑ пулсан, 1937 ҫулта 15497 пин тенкӗлӗх кӑларнӑ. Шупашкарти промышленноҫ предприйатийӗсем 1936 ҫултах куллен кирлӗ таварсем 28 мӗлйун тенкӗлӗх кӑларма тытӑннӑ. Куллен кирлӗ таварсем кӑларасси Чӑвашвӑрманпромсоюз, инвалидсен кооперацийӗ тата районсенчи промышленноҫ тӑрӑх та чылай ӳснӗ.

Республикӑре пур чӗртавар пуйанлӑхӗсем ҫинче ҫӗнӗ предприйатисем лартни, производствӑсем уҫни халичченхи республикӑре кӑларман нумай тӗрлӗ таварсем кӑларассине организацилеме май панӑ. Иккӗмӗш пиатилеткӑ ҫулӗсенче черепицӑ тӑвассине ҫӗнӗрен пуҫарса 55,5 пин тенкӗлӗх кӑларнӑ. Автомобильсем йусакан, художествӑлӑ чашӑк-чӳлмексем тата ытти таварсем тӑвакан производствӑсем уҫнӑ. Чӑвашпромсоюз системи ҫӗнӗрен производствӑсем организацилесе иккӗмӗш пиатилеткӑра 3297,3 пин тенкӗлӗх таварсем кӑларнӑ. Чӑваш вӑрманпромсоюз тӑрӑх музыкӑ инструменчӗсем, тӳшексем, дивансем, чӑлта ҫапакан ертелсенче хӑва хулӑсенчен ҫыхса сӗтел-пукансем тӑвакан тата ытти производствӑсем организациленӗ. Атӑ-пушмаксем, тумтирсем, килти тӗрлӗрен ӗҫхатӗрӗсене йусакан ертелсем нумай уҫнӑ.

Анчах та вырӑнти промышленноҫ та, промысла кооперацийӗ те ӗҫҫыннисен таварсем илес пултарулӑх ӳсӗмӗнчен йулса пыраҫҫӗ. Таварсем кӑларассине ӳстерме условисем нумай пулнӑ, халӗ те нумай. Чӗрӗ таварсен пуйанлӑхӗ пысӑк. Вӗсемпе усӑ курма механизмсем ҫителӗклӗ, ӗҫлеме вӗренсе ҫитнӗ кадрсем те пур. Апла пулин те хуҫалӑхра кирлӗ таварсем: сӗтел-пукансем, ҫуна-урапасем тата ытти ӗҫхатӗрӗсем ҫителӗклӗ таран ҫук. Куллен кирлӗ таварсем кӑларакан хуҫалӑх организацисем хӑйсен ӗҫӗсене ӗҫҫыннисен ӳссе пыракан ыйтӑвӗсене пурнӑҫа кӗртсе пырас май организацилемен пирки, паха, нумай суртлӑ чи кирлӗ таварсем кӑларасси ҫителӗксӗр пулса пырать.

Чӑвашпромсоюз руководителӗсем 1937 ҫулти плана тултарнипе мухтанма пикеннӗ. Вӗсем хӑйсем куллен кирлӗ таварсем кӑларассипе начар ӗҫлесе пынине тавҫӑрса илмеҫҫӗ-ха. Тӗрӗсрех каласан, плана Чӑвашпромсоюз правлени председателӗ Польаков йертсе пырас ӗҫре большевикла ҫирӗп йӗрке тунипе мар, пурнӑҫа кӗртме ҫӑмӑлтарах ӗҫсене ытларах тунӑ шутпа тултарнӑ. Плана строительствӑ материалӗсем кӑларассипе 64.9 процент, урапасем сӗрмели мазут кӑларассипе—43.8 процент культурӑлӑ таварсем тӑвассипе 74,7 процент, атӑ-пушмаксем тӑвассипе 95 процент ҫеҫ тултарнӑ. Чӑвашпромсоюз руководителӗсем ҫав ӗҫсенчи пушӑ вырӑна ҫӑкӑр пӗҫерес, фондсем тӑрӑх панӑ материалсенчен тумтирсем ҫӗлессине ытлашши пурнӑҫланипе витсе, шывран йӗпенмесӗр тухасшӑн. Ҫакна ӑнланса илмелле: Ӗҫҫыннисен ҫивӗч ыйтӑвӗсене шута илсе ӗҫлени, вӗсене ҫырлахтарса пыни кӑна йертсе пыракан работниксене мухтанма сӑлтав парать.

Чӑпта союзӗ тата та начар ӗҫлет. 1937 ҫулта тата кӑҫалхи йанвар уйӑхплапне тултарман, февралти плана тултарасси те хӑрушӑлӑх умӗнче. Паллах, ҫак ситменлӗх руководителсем ӗҫре ҫирӗп йӗркелӗх тума пултарайманни, стахановла йухӑма вӑйлатассишӗн тимлӗн ӗҫлеменни, производствӑ задачисене кулленхи политикӑла задачӑсемпе ҫыхӑнтарса пыма пӗлменни ҫине кӑтартса парать. Чӑпта союзӗнче кадрсем сукки, чӗрӗ таварсен пахалӑхӗ начарри ҫинчен сӑмах нумай вакласҫӗ. Кӳ тарана ситсе те сӑмах вакланинчен ӗҫ ҫине кусма хӑйулӑх ситерейместҫӗ. Иртнӗ ҫулхи ӗҫсенчен урок туса, массӑна тачӑн ҫыхӑнса куллен кирлӗ таварсем ытларах кӑларассишӗн кӗрешӗве тухас вырӑнне, вӑхӑтлӑха пулнӑ йӑвӑрлӑхсем умӗнче чӗтреме тытӑннӑ. Кӑҫалхи плана та иртнӗ ҫулхи план висипе ҫеҫ йышӑннӑ.

Тумтирсемпе атӑ-пушмаксене йусакан производствӑсем йӗркесӗр ӗҫлени те пурнӑҫра питӗ ҫивӗччӗн туйӑнать. Шупашкарти „Кожупряжь" ертелӗнче заказсене вӑхӑтра пурнӑҫламанни, заказа йапӑх туса пани, ертел руководителӗсем хушшинче ӗҫкӗ-ҫикӗ, ҫемйелӗх, пурлӑха салатасси хытӑ сарӑлни ҫинчен сигналсем сахал пулман. Анчах чӑвашпромсоюзӑн чунсӑр руководителӗсем ҫав ирсӗрлӗхсене пайанхи кунччен те пӗтермеҫҫӗ. Промысла кооперацисистеминче ертел уставне пӑсни, растратӑсем туни нистипчен те хытӑ сарӑлнӑ. Вӗсене пӗтерессишӗн кӗрешме решенисем те нумай йышӑннӑ. Ӗҫ ҫаплах пуҫланман.

Вырӑнти промышленноҫӑн, апат-ҫимӗҫ промышленноҫӗн, промысла кооперацин чылай ӗҫӗ вӑл—совет ӗҫҫыннисене кирлӗ таран пысӑк пахалӑхлӑ таварсем йышлӑн туса кӑларасси пулать. Кӑҫал куллен кирлӗ таварсем Чӑваш вӑрманпромсоюз тӑрӑх 3.800 пин тенкӗлӗх, Чӑвашпромсоюз тӑрӑх 19.309 пин тенкӗлӗх кӑлармала. Таварсен пахалӑхне лайӑхлатмала, хакӗсене йӳнетмеле. Ку ответлӑ задачӑна пурнӑҫа кӗртессипе промысла кооперацисоюзӗнчи, апат-ҫимӗҫ тата Вырӑнти промышленноҫ Халӑх Комиссариачӗсен предприйатисенчи, ертелсенчи ӗҫре ӳснӗ кадрсене йертсе пырас ӗҫе хӑйулӑн лартассине пикӗсе хурса йӗркелемеле. Иккӗленмелли те ҫук, йертсе пырас ӗҫре массӑсем хушшинче ӳснӗ ҫынсем ӗҫлеме тытӑнсан, пӗтӗм ӗҫре большевикла ҫирӗп йӗрке пулать. Пӗтӗм ӗҫре ҫирӗп йӗрке туни—рабочисемпе инженерла-техникла работниксен, алӑстаҫсен производствӑра стахановла ӗҫлес активлӑхне пысӑккӑн ҫӗклет, сӑтӑрҫӑсен йулашкисене, ситменлӗхӗсене, кайа йулса пырассине хӑвӑртӑн пӗтерме условисем туса парать.

Пирӗн лайӑх ӗҫлекен предприйатисем, производствӑсем, ертелсем, рабочисем, алӑстаҫсем сахал мар. Чӑптасоюзӗ системине кӗрекен Анаткасри корзинӑсем тӑвакан ертел 1937 ҫулхи плана 141 процент, Упакассинчи ертел 151 процент тултарнӑ. 500 алӑстаҫ ытла ҫӗнӗ нормӑсене иртерсе тултараҫҫӗ. Пысӑк тухӑҫлӑхпа ӗҫлекенсем чӑвашвӑрманпромсоюз системинче те нумай. Улатӑрти „Красный кустарь" ертел йанварти плана 200 процент, Вӑрнарти „Мебель" ертел 150 процент тултарнӑ. Канашри „Авангард" ертел 1937 ҫулти плана 222 процент пурнӑҫа кӗртнӗ. Шӑхасан районӗнчи Малтикас Шӗкӗрти Сталин йачӗпе тӑракан ертелти Д. Йефимов нормӑна 200 процент, Шупашкарти „Металлист" ертелӗнчи Карповпа Белов йулташсем нормӑна йалан иртерсе тултараҫҫӗ. Стахановла тухӑҫлӑхпа ӗҫлекенсен шучӗ пиншерӗн шутланать. Вӗсен ӗҫ меҫлечӗсене, опычӗсене пӗрмайах сарса пымала. Нормӑна тултарман рабочи, алӑстаҫ пулмала мар,—ҫакнашкал пайанхи задачӑ. Кӑна пурнӑҫа кӗртме условисем те, опытсем те ҫителӗклӗ. Ӗҫлеме условисем туса пани, культурӑлӑ-массӑлӑ ӗҫе лайӑхлатни ӗҫе пӗлсе организацилени ҫеҫ кирлӗ.

Куллен кирлӗ таварсем кӑларакан хуҫалӑх организацисен ҫӗршыв умӗнче хӑйсен задачисене пурнӑҫа кӗртсе пыма вӗренме вӑхӑт.

Ахӑрлӗ ҪАРПА ТИНӖС-ҪАР ФЛОЧӖ 20 ҪУЛ ТУЛТАРНА ТЕЛЕ.

ӲКЕРЧӖК ҪИНЧЕ: „Совет Союзӗн Маршалӗ В. К. Блюхер й. Инҫет-Хӗвелтухӑҫӗнчи Хӗрлӗйалавлӑ Уйрӑм ҫарӑн тактикӑлӑ вӗренӳвӗнче колхозниксемпе калаҫать". П. Луценко фото-ӳкерчӗкӗ. (Фотоискусствӑн Пӗтӗм Союзри пӗрремӗш выставки). Союзфото репродукцийӗ.

ССР Союз Аслӑ Совечӗн Президиумӗ кӑларнӑ указ

Шалти ӗҫсен Халӑх Комиссариачӗн Инҫет-Хӗвелтухӑҫ крайӗнчи Управлени работникӗсене тата Чукунҫул Халӑх Комиссариачӗн работникӗсене наградӑласси ҫинчен

Грузсене турттарас тӗлӗшпе правителствӑ панӑ ответлӑ заданийе кӑтартулӑн та тӗрӗс тултарнӑшӑн наградӑлас:

а) Шалти ӗҫсен Халӑх Комиссариачӗн Инҫет-Хӗвелтухӑҫ крайӗнчи Управлени работникӗсене:

Хӗрлӗ Ҫӑлтӑр орденӗпе:

1) Георгий Александрович Абросимова.
2) Иван Андрейевич Галактионова,
3) Марк Илйич Говлича,
4) Валериан Александрович Гостева,
5) Александр Михайлович Давыдова,
6) Михаил Осипович Диментмана,
7) Иван Дмитрийевич Зубцова,
8) Иван Максимович Иванова,
9) Илйа Матвейевич Иванова,
10) Николай Лукич Ковшуна,
11) Александр Петрович Кононова,
12) Александр Алексейевич Лазарева,
13) Дмитрий Михайлович Мильукова,
14) Михаил Андрейевич Печенкина,
15) Иван Михайлович Семенова,
16) Владимир Иванович Скокова.
17) Федор Георгийевич Соколова,
18) Александр Иванович Трофимова,
19) Михаил Алексейевич Усова,
20) Сергей Василйевич Хамина.

Знак Почета орденӗпе:

1) Михаил Семенович Бобрушева,
2) Иван Никонович Дыдика,
3) Михаил Иванович Казадайева,
4) Александр Дмитрийевич Сорокина,
5) Федор Павлович Чунина.

б) Чукунҫул Халӑх Комиссариачӗн работникӗсене:

Ленин орденӗпе:

1) Алексей Петрович Горшенина,
2) Никанор Иванович Попова.

Ӗҫ Хӗрлӗ йалав орденӗпе:

1) Николай Алексейевич Блинова,
2) Александр Александрович Кожухова,
3) Йефим Иванович Павленкона,
4) Иван Тимофейевич Тимошенкона.

Хӗрлӗ Ҫӑлтӑр орденӗпе:

1) Михаил Йаковлевич Баранова,
2) Андрей Василйевич Брикина.

Знак Почета орденӗпе:

1) Федор Диомидович Безверхина,
2) Иван Василйевич Кирейева,
3) Петр Анисимович Ронжина,
4) Андрей Петрович Соколова,
5) Павел Степанович Тоболова,
6) Роман Иванович Йакимовскине.

ССР Союзӗн Аслӑ Совечӗн Президиум Председателӗ М. КАЛИНИН.
ССР Союзӗн Аслӑ Совечӗн Президиум секретарӗ А. ГОРКИН.

Мускав, Кремль.
1938 ҫулти февралӗн 4-мӗш.

„МУРМАНЕЦ" ПАПАНИН ЛАГЕРӖ ПАТНЕ КАЙАТЬ

„МУРМАНЕЦ", 3—II (ТАСС корр). „Мурманец" екипажӗ правителствӑ хушнӑ ӗҫе пурнӑҫа кӗртме—Папанин ушкӑнӗнчи геройсене пӑр ҫинчен илсе тухма—пӗтӗм вӑйа хурса тӑрӑшать. Капитан Ульйанов йулташ талӑкӗпех тенӗ пек капитанӑн пӑхса пымали вырӑнӗнчен анмасть, вӑл карапа пысӑк тата вак пӑрсем хушшипе ӑста илсе пырать. Ир пулнӑ тӗле ик-виҫ метр хулӑнӗш пӑрсем хушшинчен таса шыв ҫине тухрӑмӑр, кунта тӗрлӗрен кайӑксем вӗҫнине курӑмӑр.

Радистсем черетпе вахтӑра тӑраҫҫӗ, „Ҫурҫӗр польусӗ" станцине итлеҫҫӗ. Кренкель пирӗнпе пӗрмайах ҫыхӑну тытать. Баренцбургри радио станципе те ҫыхӑну тытатпӑр.

Пайан 13 сехетре ҫурҫӗр широтин 71 градус та 30 минутӗнче, хӗвеланӑҫ долготин 8 градус та 30 минутӗнче пултӑмӑр. Чылайах пӗлӗтлӗ. Ҫурҫӗр йенчен 1 баллӑ ҫил вӗрет. Таврала 20 километр таран курӑнать. Курӑнакан вырӑнта пӗр чӗрӗкӗ ҫеҫ таса шыв, ытти—пӑр. Пӗр-ик метр хулӑнӗш пӑр татӑкӗсем сехетре 1—2 миле хӑвӑртлӑхпа ҫурҫӗр-хӗвеланӑҫ йенчен кӑнтӑр-хӗвелтухӑҫнеле йухаҫҫӗ, темиҫе йенеле те таса шыв курӑнать.

Гренланди тинӗсӗнчи ҫанталӑк

Ҫанталӑк мӗнле тӑнине сӑнакан, тӗп институт пӗлнӗ тӑрӑх, Гренландин хӗвелтухӑҫ ҫыранӗнче, Мигг-бухта районӗнче, февралӗн 4-мӗшӗнчи ирхине 7 сехетре ҫурҫӗр-хӗвеланӑҫ йенчен 5 баллӑ ҫил вӗрсе тӑнӑ. Сивӗ 10 градус пулнӑ. Йур вӑйлӑ ҫунӑ, талкишпех пӗлӗтлӗ тӑнӑ.

Мигг-бухта патӗнче февралӗн 4-мӗшӗнче кунӗпех ҫавӑн пек 5 баллӑ ҫил вӗрсе тӑнӑ. 13 сехетре кӑштах ӑшӑтнӑ—сивӗ 9 градус пулнӑ (ун умӗнхи кун сывлӑшра сивӗ 20 градус пулнӑ.) Чарӑнмасӑр йур ҫунӑ.

Йан-Майен утравӗ тӗлӗнче февралӗн 4-мӗшӗнчи ирхине 7 сехетре 4 баллӑ ҫил вӗрсе тӑнӑ, талкишпех пӗлӗтлӗ пулнӑ, сивӗ—8 градус. 13 сехетре ҫил ҫавӑнпекех вӗрсе тӑнӑ, сивӗ 7 градус пулнӑ.

Гренланди тинӗсӗнче ҫывӑх вӑхӑтра вӑйлӑ ҫил-тӑвӑл пулать тесе калама сӑлтав ҫук. (ТАСС.)

Папанин лагерӗнче

„ҪУРҪӖР ПОЛЬУСӖ" станци, февралӗн 4-мӗшӗ, 12 сехет (радио тӑрӑх). Ҫурҫӗр-хӗвеланӑҫ йенчен 4 баллӑ ҫил вӗрет, талкишпех пӗлӗтлӗ, йур ҫӑвать, сивӗ 9 градус.

О. Й. Шмидт йулташ Ленинградра

ЛЕНИНГРАД, 3—II (ТАСС). Пайан Ленинграда „Красная стрела" пойаспа Ҫурҫӗр ҫулӗсен Тӗп Тытӑмӗн начальникӗ, Папанин йулташӑн ушкӑнне пӑр ҫинчен илсе тухакан експедицине йертсе пыракан О. Й. Шмидт йулташ ҫитрӗ. Ӑна вокзалра Ҫурҫӗр ҫулӗсен Ленинградри территориллӗ тытӑмӗпе гидрографи тытӑмӗн представителӗсем тата пичет представителӗсем кӗтсе илчӗҫ. Малтанхи кун хушшинче Шмидт йулташ „Ермак" пӑрҫӗмӗрене йусас ӗҫ мӗнле пынипе паллашрӗ.

„Ермак" пӑрҫӗмӗрене йусас ӗҫре халь 450 ҫын ӗҫлеҫҫӗ. Вӗсем пысӑк вӑй-хӑватпа ӗҫлеҫҫӗ. Сӑмахран, карапӑн тӗп машинӗсене пуҫтарас ӗҫе йаланхинчен виҫӗ хут хӑвӑртрах тӑваҫҫӗ.

„Таймыр" Норвеги ҫыранӗнчен пилӗк милӗре пырать

„ТАЙМЫР" БОРЧӖ, февралӗн 4-мӗш. (ТАСС-ӑн йатарласа кайнӑ корреспонденчӗ). Норвеги ҫыранӗнчен пилӗк милӗре пыратпӑр. Кӑнтӑр-хӗвеланӑҫ йенчен сивӗ ҫил вӗрет. Хӑшпӗр чухне карап сӑмсипе шыв ӑсса илетпӗр. Каҫ пулас тӗле Нордкоп сӑмсахӗнчен иртме шутлатпӑр. Карап ҫинче пурте йӗркелӗ: Карап ҫинчи експедицин хӗрӳлӗ пурнӑҫӗ пуҫланчӗ.

„Таймыр" ҫинчи експедици руководителӗ ОСТАЛЬЦЕВ.

Хӗрлӗ Ҫарпа Тинӗс-Ҫар флочӗ 20 ҫул тултарас умӗн.

ТАЛАНТСЕМ

ЛЕНИНГРАД, 2—II (ТАСС). Хӗрлӗ Ҫарпа Тинӗс-Ҫар флочӗ тӑван ҫӗршыва сыхлама хӑйулӑ та ҫирӗп боецсем хатӗрленипе пӗрлех, социализмла промышленноҫа вальли пысӑк квалификацийӗ кадрсем хатӗрлесҫӗ, талантсене аталанма пулӑшаҫҫӗ.

Хресчен ывӑлӗ Афанасий Константинович Сырков Хӗрлӗ флота служба пынӑ чухне хутла сахал пӗлнӗ. Кунта вӑл большевикла ҫине тӑрса вӗренме тытӑннӑ та, вӑтам шкул программи тӑрӑх вӗренсе тухнӑ.

Ҫар ӗҫне тата политикӑна пит лайӑх вӗренсе пынӑшӑн Сырков йулташа чи аслӑ наградӑ—Ленин орденӗ панӑ. Халӗ вӑл Сталин йачӗпе тӑракан промышленноҫ Академинче тинӗс карапӗсене тӑвас искусствӑна вӗренет. Сырков йулташ флотра—шыв айӗн ҫӳрекен лодкӑ ҫинче службӑра пулнӑ чухне ҫирӗп тӳсӗмлӗх илнӗ хыҫҫӑн. Академире те малта пыракан совет гражданинӗ пулса тӑрать. Сырков йулташ пӗрремӗш сурҫулта пит лайӑх вӗреннӗ. пур предметсемпе те отлично отметкӑсем илнӗ.

Красноармейец пулнӑ Тимофейев йулташ иккӗмӗш ҫул ӗнтӗ художествӑ Академийӗнче вӗренет. Инҫет-Хӗвелтухӑҫӗнчи Хӗрлӗ йалавлӑ уйрӑм ҫарта Тимофейев йулташа вӗренме мӗн кирлине пурне те туса панӑ. Унта пулнӑ чухне вӑл малала вӗренме лайӑх хатӗрленнӗ. Тимофейев йулташӑн „Красноармейецсем колхозра" тата „Артиллериссем фронтра" йатлӑ картинисене Мускава уйав тӗлне уҫӑлакан выставкӑна йанӑ.

Ашшӗ сӑмахӗ

НОВОХОПЕРСК, 3-II (ТАСС). Старожильйе йалӗ хӗрринче, йуханшыв ҫыранӗнче пысӑках мар ҫурт ларать. Кунта „Красная заря" йалхуҫалӑх ертелӗнчи 63 ҫулхи колхозник Йакӑв Григорйевич Лоскутов хӑйӗн арӑмӗпе—Феодосийа Семенӑвнӑпа пурӑнать.

Йакӑв Григорйевичпа Феодосийа Семенӑвна виҫӗ ывӑльне Хӗрлӗ Ҫара ӑсатнӑ. Аслӑ ывӑлӗ—Дмитрий сакӑр ҫул хушши ӗнтӗ Рабочисемпе Хресченсен Хӗрлӗ Ҫарӗнче службӑра. Вӑл артиллери училищинчен лайӑх вӗренсе тухнӑ, техник пулса ӗҫлет. Иккӗмӗш ывӑлӗ—Василий—льотчик. Виҫҫӗмӗш ывӑлӗ—Ҫтепан, танк чаҫӗнче.

Нумай пулмасть Йакӑв Григорйевич патне льотчик Василий хӑнана пынӑ. Старикпе карчӑк ывӑльне пит савӑнӑҫлӑ кӗтсе илнӗ. Вӗсем унтан вӗренӳ ҫинчен, командирсем ҫинчен, Хӗрлӗ Ҫарти пурӑнӑҫ ҫинчен ыйтса пӗлнӗ.

Чей ӗҫсе ӑшшӑн калаҫса ларнӑ чухне Йакӑв Григорйевич хӑйӗн ывӑльне ҫапла каланӑ:

—Епӗр, арӑмпа иксӗмӗр, виҫӗ ывӑл пӑхса ӳстертӗмӗр. Вӗсем виҫҫӗшӗ те социализм ҫӗршывне сыхлас ӗҫре. Сана, Ваҫӑ, аҫу сӑмахне калам: хамӑрӑн ырӑ тӑван ҫӗршывшӑн тӳрӗ кӑмӑлпа ӗҫле, ҫар ӗҫне вӗренсе алла илсе пыр, хамӑрӑн хӑватлӑ ҫӗршыва, хамӑрӑн большевикла партийе йурат. Хӗрлӗ Ҫарпа Тинӗс-Ҫар Флочӗ 20 ҫул тултарнӑ тӗле ҫӗнӗ ҫӗнтерӳсем туса ҫит. Асрах тыт, Василий, пиччӳсене те ҫырса пӗлтер: тӑшман совет ҫӗршывӗн чиккисене пӑсма хӑйсан, сире пулӑшма, тӑшмана пӗтерсе хума пирӗн ҫӗршыври рабочисемпе хресченсем мӗлйуншарӑн ҫӗкленӗҫ.

Украинӑ ӗҫҫыннисем Г. И. Петровский 60 ҫул тултарнине паллӑ тӑваҫҫӗ

КИЙЕВ, февралӗн 4-мӗш (ТАСС). Февралӗн 4-мӗшӗнче Совет Украинин ӗҫҫыннисем ватӑ большевик, Ленин—Сталин ӗҫӗшӗн ывӑнма пӗлмесӗр кӗрешекен борец, Украинӑ СС Республикин Тӗпӗҫтӑвкомӗн улшӑнмасӑр ӗҫлекен председателӗ, ССР Союзӗн Аслӑ Совет Президиумӗн Председател заместителӗ—Григорий Иванович Петровский йулташ ҫурални 60 ҫул тултарнине паллӑ тунӑ.

Украинӑ столицинчи пысӑк предприйатисен цехӗсенче вӑл кун Петровский йулташӑн пурнӑҫӗпе революцилӗ ӗҫӗсем ҫинчен калаҫусем туса иртернӗ. Ленин гвардинчи ватӑ большевикӑн йубилейӗ ҫинчен Украинӑри мӗн пур хаҫатсем ҫутатса ҫырнӑ.

Г. И. Петровский йулташ—ӑна ӑшшӑн сывлӑх сунакан тата социализмлӑ тӑван ҫӗршыва усӑ кӳрес тесе нумай ҫулсем хушши ӑнӑҫлӑн ӗҫлесе пыма ырӑ сунакан тӗрлӗ организацисемпе предприйатисенчен нумай саламлӑ ҫырусем илнӗ.

Планран иртерсе ҫӗрмамӑкӗ панӑшӑн 938 мӗлйун тенкӗ ытла тӳленӗ

Союзра йанвар уйӑхӗ иртнӗ тӗле 1937 ҫулхи тухӑҫран 2 477.287 тоннӑ чӗрӗ ҫӗрмамӑкӗ хатӗрленӗ. Вӑл ӗнтӗ правителствӑ панӑ заданирен 98,6 процент пулать. 1936 ҫулта Союзра пурӗ 2.392.828 тоннӑ ҫӗрмамӑкӗ хатӗрленӗ пулнӑ.

Нумай республикӑсем вӑйлӑ тухӑҫлӑ ҫӗрмамӑкӗшӗн кӗрешсе пысӑк ҫӗнтерӳсем тунӑ. Кӑҫалхи ҫул ҫак ӗҫре Таджикистанри колхозниксем мала тухнӑ. Вӗсем шӑваракан ҫӗрсем ҫинче вӑтам шутпа гектартан 16 центнер ытла ҫӗрмамӑкӗ пуҫтарса илнӗ, Киргизири, Казахстанри, Азербайджанри, Грузири, Кара-Калпакири, Одессӑпа Николайӗв облаҫӗсенчи тата Краснодар крайӗнчи колхозсем ҫӗрмамӑкӗ планран чылай иртерсе панӑ.

Колхозсене планран иртерсе ҫӗрмамӑкӗ панӑшӑн хушса преми 938.186 пин тенкӗ тӳленӗ. Ҫав суммӑран ҫуррине ытла—578.018 пин тенкӗ—Ӳзбекистанри колхозсем илнӗ. Таджикистанри колхозсем 98.927 пин тенкӗ илнӗ.

(ТАСС).

ССР Сойузĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ çумĕнчи Государствă План Комиççийĕн ПОЛОЖЕНИЙĔ

ССР Сойуз Халăх Комиссарĕсен Совечĕ йышăннă постановлени

1. ССР Сойузĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ çумĕнчи Государствă План Комиççийĕ (ССР Сойузĕн Госпланĕ)—ССР Сойузĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕн йаланхи комиççийĕ пулса тăрать.

2. ССР Сойузĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ çумĕнчи Государствă План Комиççийĕн членĕсем 11 çын пулаççĕ, унăн членĕсене кашнинех уйрăмăн—план ĕçĕнчи йертсе пыракан работниксен, чи паллă ăслăлăх работникĕсемпе специалиссен хисепĕнчен—ССР Сойузĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ çирĕплетет.

3. ССР Сойузĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ çумĕнчи Государствă План Комиççийĕ:

а) халăх хуçалăхĕн малашнехи ÿсĕм планĕсене, çулталăк тата квартăл планĕсене хатĕрлет тата пăхса тухма ССР Сойузĕн Халăх Комиссарĕсен Советне тăратать;

б) ССР Сойузĕн халăх комиссариачĕсемпе ведомствисем тата сойузлă республикăсем тăвакан малашнехи ÿсĕм планĕсем тăрăх, çулталăк тата квартăл планĕсем тăрăх ССР Сойузĕн Халăх Комиссарĕсен Советне закљученисем тăратать;

в) ССР Сойузĕн йышăннă халăх хуçалăх планĕсене пурнăçа кĕртнине тĕрĕслет;

г) ССР Сойузĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ хушнипе тата хăй пуçарнипе социалисăмла хуçалăхăн уйрăм ыйтăвĕсене тĕпчесе хатĕрлет;

д) хуçалăхлă уйрăм ыйтусем тăрăх експерт комиççийĕсене уйăрать;

е) социалисăмла планировани методологи ыйтăвĕсене тĕпчесе хатĕрлет тата ССР Сойузĕн Халăх Комиссарĕсен Советне çирĕплетме тăратать;

ж) ССР Сойузĕнче социалисăмла учот ĕçне йертсе пырать.

4. Государствă План Комиççийĕн чи пысăк задачĕ—ССР Сойузĕн халăх хуçалăх планĕнче халăх хуçалăхĕн тĕрлĕрен пайĕсен аталанăвĕ тĕрĕс шайлăн пулса пымала тăвасси тата халăх хуçалăхĕн пĕр пайĕсем малала кайнă вăхăтрах теприсем кайа йулни пулмала мар тăвасси пулать.

Государствă План Комиççийĕн çак задачăна пурнăçа кĕртсе пымала: ССР Сойузĕн халăх хуçалăх планĕнче социалисăмла производствăн пĕрпĕринпе çыхăнса ĕçлекен пайĕсен, çĕрайĕнчен кăларакан тата ĕçлесе кăларакан промышленнăçсен, йалхуçалăхĕпе индустрин, транспортпа халăх хуçалăхĕн ĕçĕсене тĕрĕс çыхăнтармала, производства ÿсĕмĕпе потреблени ÿсĕмне, производствăна укçа-тенкĕпе ăна кирлĕ йапаласене парса тăрассине тĕрĕс çыхăнтармала, инçете тата хире-хирĕç турттарассине пĕтерме кирлине, предприйатисене чĕртавар вырăнĕсем патне тата вĕсен продукцине илсе тăракан районсем патне çывхартма кирлине асра тытса, предприйатисене районсенче тĕрĕс вырнаçтармала.

5. Халăх хуçалăхĕн планне тултарас çĕрте прорывсем пуласси не сирме, Государствă План. Комиççийĕ:

а) халăх комиссариачĕсем, ведомствăсем тата предприйатисем государствăн халăх хуçалăх планне мĕнле тултарса пынине тĕрĕслет;

б) халăх хуçалăхĕн планне мĕнле тултарса пынинчен тухса тăракан ыйтусемпе сĕнÿсене пăхса тухма ССР Сойузĕн Халăх Комиссарĕсен Советне тăратать.

6. Маларах кăтартнă задачăсене пурнăçа кĕртсе пыма Государствă План Комиççийĕн пур:

а) хăйĕн тĕпри аппарачĕ, унта—пайсем, сектăрсем тата ушкăнсем;

б) республикăсенче, крайсенче тата облăçсенче Государствă План Комиççийĕн халăх хуçалăх планне тултарса пынине тĕрĕслекен уполномоченнăйĕсем.

Уполномоченнăйсем тÿрех ССР Сойузĕн Госпланне пăхăнса тăраççĕ, республикăсенчи, крайсенчи тата облăçсенчи план комиççисене пăхăнмасăр ĕçлеççĕ.

7. Государствă План Комиççийĕ çумĕнче халăх хуçалăх учочĕн Тĕп Тытăмĕ пур, вăл ССР Сойузĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ çирĕплетекен ăрасна Положени тăрăх ĕçлет.

8. Государствă План Комиççин тĕпри аппарачĕн структури çакăн пек пулмала тăвас:

Халăх хуçалăхĕн пĕтĕçтернĕ планĕн пайĕ, кунтах—халăх хуçалăх балансĕн ушкăнĕ.

Сектăрсем:

Çершыв пуйанлăхĕсен, хутмалисен, кунтах—хутмалисен балансĕн ушкăнĕ,

Електрификацин, кунтах—енергетикă балансĕн ушкăнĕ,

Металлургин, кунтах—металлсен балансĕн ушкăнĕ,

Хими промышленнăçĕн, машиностройенин, кунтах—оборудовани балансĕн ушкăнĕ,

Авто-авиатранспăртăн тата çул-йĕр хуçалăхĕн,

Вăрман промышленнăçĕн,

Апат-çимĕç промышленнăçĕн,

Çăмăл промышленнăçăн,

Чукунçул транспорчĕн,

Шывçул транспорчĕн,

Йалхуçалăхĕн,

Таварçавăрнăшĕн,

Вырăнти промышленнăçпа промысла кооперацин,

Строителствă материалĕсен промышленнăçĕн,

Пурăнмали çурт-йĕр хуçалăхĕн,

Тулти суту-илÿн,

Куљтурăпа кадрсен,

Сывлăха сыхлавăн,

Çыхăнун.

Государствă План Комиççин сектăрĕсем халăх хуçалăхĕн хăйсене тивĕç пайĕсенчи планировани мĕн пур ыйтăвĕсем тĕлĕшпе ĕçлесе тăраççĕ тата плана пур йенпе техисеп тата пахалăх йĕнпе—тултарнине тĕрĕслесе тăраççĕ.

Государствă План Комиççийĕн составĕнче, каланисемсĕр пуçне, çаксем пур:

План ĕçĕнчи кадрсен сектăрĕ,

Изобретенисене регистрацилекен бўро,

Ĕçсене пăхакан тытăм,

„Плановое хозяйство" журнал тата издателствă,

Госплан председателĕн секретариачĕ.

9. Государствă План Комиççийĕн республикăсенчи, крайсенчи тата облăçсенчи уполномоченнăйĕсене, ССР Сойузĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ çумĕнчи Государствă План Комиççин председателĕ тăратнипе, ССР Сойузĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ уйарса лартать тата вырăнтан кăларать, вĕсем унăн хушăвĕсем тăрăх ĕçлесе пыраççĕ.

Государствă План Комиççийĕн уполномоченнăйĕсем сойуз бўджетĕнче Госплан смети çинче тăраççĕ.

10. ССР Сойузĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ çумĕнчи Государствă План Комиççин—халăх комиссариачĕсемпе ведомствăсене, ССР Сойуз Госпланĕн республикăсенчи, крайсемпе облăçсенчи уполномоченнăйĕсен — тивĕçлĕ предприйатисемпе хуçалăх органĕсене—халăх хуçалăхĕн планĕсене тĕрĕслессипе çыхăнса тăракан кирлĕ материалсене тата ăнлантарса панисене тăратма хушмалли права пур.

11. Сойузлă тата автономлă республикăсен Халăх Комиссарĕсен Совечĕсем çумĕнчи, край тата облăç ĕçтăвкомĕсем çумĕнчи план комиççийĕсем планировани методологи ыйтăвĕсем тĕлĕшпе, çавăн пекех тата халăх хуçалăх планĕсене тултарнине тĕрĕслес ыйтусем тĕлĕшпе Госплан кăтартăвĕсем тăрăх ĕçлесе пыраççĕ.

12. Государствă План Комиççин членĕсен Госпланра ĕçленĕ хушăрах совет тата хуçалăх органĕсенче урăх ĕçре тăма йурамасть.

13. Государствă План Комиççийĕ социалисăмла хуçалăхăн пит паха ыйтăвĕсене, халăх хуçалăхĕн малашнехи ÿсĕм, çулталăк тата квартăл планĕсене тăвассипе тата вĕсене тултарасси мĕнле пынине тĕрĕслессипе çыхăнса тăракан ыйтусене сÿтсе-йавма хăйĕн ларăвĕсене тăвать.

14. Государствă План Комиççийĕ çумĕнче Совет пур,—унăн составĕ: Госплан членĕсем, Госплан уполномоченнăйĕсем, план ĕçĕнчи ытти работниксем—пурĕ 90 çын таран.

ССР Сойузĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕн председателĕ
В. МОЛОТОВ.

ССР Сойузĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕн ĕçĕсене пăхаканĕ
Н. ПЕТРУНИЧЕВ.

Мускав, Кремљ.
1938 çулти февралĕн 2-мĕшĕ.

Тăвайсем „ăмăртаççĕ"...

Епĕр Козлов йулташа хăйĕн пĕчĕк кабинетне кĕрсе ларнине куртăмăр. Вăл малтан çĕнĕ хаçатсене пăхса тухрĕ.

— Çуракине лайăх иртерер!

— Ăмăртува тухар!

Çак йĕркесене вуланă хыççăн, нимĕн тума пĕлмесĕр шухăша карĕ.

— Чăнах,. çураки çывхарать. Хатĕрленме вăхăт. Хăвăртлăхсем çителĕклĕ-и-ха пирĕн? Начар. Питĕ начар! Вăрлăх та улăштармала. 10,8 процент. Агротехникă ĕçĕ тата... Минераллă çăнăх... Торф. Халĕх тарăнăн шухăшласа пăхмала пулать.

Кăшт тăрсан хăйĕн кабинечĕпе йунашар пÿлĕмре ларакан Йефимов йулташа чĕнчĕ.

Козловпа Йефимов нумай хуша калаçса ларчĕç.

— Тăхта-ха, ыран-пайан колхозник-стахановецсен, ударниксен районри сљочĕ уçăлать. Мĕн пăхса тăратпăр епĕр. А мĕн... унта ак, пĕр тарăхсан, çураки иртерме пĕр-пĕр районпа ăмăртува тухма ыйту лартатпăр. Пире çÿлтен план панă. Çак план тăрăх вара..

Вара Козловпа Йефимов „канашлувĕ" хупăнчĕ. Канашлу президумĕнче районти çĕрĕç пайĕн пуçлăхĕ Козловпа районти çĕрĕç пайĕн аслă агрономĕ Йефимов йулташсем пулчĕç.

Йанварĕн 28-мĕшĕ. Тăвай районĕнчи колхозник-стахановецсен сљочĕ уçăлчĕ.

— Йулашки ыйту: тĕрлĕрен çине куçатпăр. Çуракине лайăх иртерес тесе пĕр-пĕр районпа ăмăртăва тухас тетпĕр. Кунпа пурте килĕшмеле пек туйăнать. Мĕнле?

Сљот президиумĕн председателĕ Родионова йулташ залăра ларакансене алă çĕклеме ыйтрĕ.

Ăмăртува тухма килĕшрĕç.

— Апла, йулташсем, Вăрмар районĕпе ăмăртува тухатпăр.

Ăмăртура мĕнле обйазателствăсем илесси çинчен калама тата договора вуласа пама Йефимов йул. сăмах илет.

— Епĕр, Тăвай районĕнчи колхозниксем,—тет вăл,—кăçал гектартан вăтам шутпа 120 пăт тĕштырă туса илме пулатпăр.

— Тăхтăр-ха, председател, епĕ калас тетĕп.

— Ну, мĕн хушса каласшăн-и есĕ?

— Ара, йулташсем, пĕлтĕр 130 пăтшăн ăмăртрăмăр та, кăçал... Кăçал апла кайала чакатпăр пек тухать...

Йефимов малала вулать:

— Хĕллехи вăхăтра 144000 лав тислĕк кăларатпăр. Кунтан хăрамала мар. Ку Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕн планĕ...

Сљот президиумĕн председателĕ:

— Йышăнатпăр-и? Кам калас тет?

Никам та чĕнмест.

— Малала?

Малала агрономсем хушшинче договорăн кашни пункчĕ тăрăх тавлашу пуçланса кайать.

Кĕç машинă-трактор станцин аслă агрономĕ сиксе тăрать. Кĕçех çĕрĕç пайĕн ытти агрономĕсен хумĕ çĕкленет.

— Ытла сахал. Кунпа никам та килĕшме пултараймасть. Агротехникă апла тума хушмасть.

— Куљтурăлă-массăлă ĕç пирки те тĕплĕн каламан.

Залă пушанса йулма пуçларĕ.

— Договорăн пункчĕсене йышăнатпăр-и?...

Çакăнпа сљот хупăнать.

Ив. Мосейев

Кивĕ Шелтем васкамасть

Канаш районĕнче пĕр пек йатлă икĕ йал пур: пĕри—Кивĕ Шелтем, тепри—Çĕнĕ Шелтем. Иккĕшĕ те пĕр йалсоветнех кĕреççĕ, йунашарах лараççĕ. Икĕ йалĕнче те колхоз пур. Анчах та, ĕççене илсе пăхсан, пачах урăхла вара. Çĕнĕ Шелтемсем çĕнĕле, Кивĕ Шелтемсем—ÿрĕк-сÿрĕкĕн ĕçлеççĕ. Çĕнĕ Шелтем колхозĕ малта пырать, Кивĕ Шелтем колхозĕ пек кайра пыраканни районĕпе те урăх çук.

Кивĕ Шелтем колхоз членĕсем малашне лайăхрах ĕçлетчĕр тесе, Çĕнĕ Шелтем колхоз членесем кăçал вĕсене социалисăмла ăмăртса ĕçлеме чĕнме шутларĕç. Ăмăрту ĕçне чи малтанах Çĕнĕ Шелтем коңухĕсем пуçарса йарасшăнчĕ. Çав шутпа вĕсем пĕрле пухăнса Кивĕ Шелтеме карĕç те, хăйсем мĕн пирки пыни çинчен каласа пачĕç.

— Есĕр лашасене йапăх пăхатăр, апла ĕçлесен çуракине сирĕн лашасем начар тухма пултараççĕ. Айтăр, пирĕн пек ĕçлеме социалисăмла ăмăртăва тухар,—тенĕ Çĕнĕ Шелтем коңухĕсем.

Анчах, Кивĕ Шелтем колхозникĕсем çавăн çинчен калаçма та пуйăнман, пынисем те ним калаçмасăрах ларнă, колхоз председателĕ хăй Канаша тухса тарнă. Çапла вара, коңухсен ахалех таврăнмала пулнă. Кивĕ Шелтемсене çĕнĕле ĕçлеме кам чăрмантарса тăрать-ши?

Йа Михайлов.

—О—О—

Садвинтрест совхозĕнче

Шупашкарти Садвинтрест совхозĕ кашни çулах колхозсем, государствă учрежденисем тата хула ĕççыннисем ваљљи чечексем, пахча çимĕç калчисем çитĕнтерсе сутать.

Совхоз кăçалхи çуракине хатĕрленнĕ май хăйĕн участкисем çине 790 тоннă тислĕк кăларнă, 81 кубла метр торф турттарнă. Йал хуçалăх машинисене те пĕтĕмпех йусаса лартнă.

Кăçал совхозра татах çĕнĕ суртлă пахча-çимĕççене лартса тăваççĕ. Догăвăр тăрăх колхозсем, государствă учрежденисем ваљљи парниксенче пахча-çимĕç калчисене çитĕнтерсе параççĕ. Халĕ совхозăн парникĕнче пахча-çимĕç вăрлăхĕсене акма хатĕрленеççĕ. Парник çине минераллă имçамсем тăкаççĕ. Кăçал совхоз Шупашкарти Торга тата колхозсене купăста калчи 3 гектар çинче, кишĕр калчи 1,5 гектар, помидор калчи 2 гектар, выљăх кăшманĕ—2,5 гектар, хăйар—2,25 гектар, сухан—0,35 гектар çине лартса çитĕнтерсе сутать.

Çаксемпе пĕрлех совхоз улмуççи, çырла йăвăççисем лартса çитĕнтерет. Совхоз виктори, тĕрлĕ çырласем, йăвăç улмисем туса илсе ĕççыннисене сутать.

С. Воробйов.

Канашри машинă-трактор маçтерской çителĕксĕр ĕçлет

Канашри машинă-трактор маçтерскойĕн директорĕ пулса ĕçленĕ А. И. Матвейев мастерскойри рабочисен нушисем çине тата вĕсен ыйтăвĕсем çине питĕ çийелтен пăхнă. Вăл рабочисен пурнăç условийĕсене лайăхлатас тĕлĕшпе, рабочисене производствăлă тата материаллă условисем туса парас тĕлĕшпе, çавăн пекех тата куљтурăлă-массăлă ĕçе организацилес тата рабочисене столовăй туса парас тĕшĕлпе нимĕн те туман. Вăл рабочисем хушшинче социалисăмлă ăмăртупа ударничествăна организацилеме кирлĕ мар, тесе шутланă.

Паллах, рабочисем çине çавăн пек киревсĕр пăхнипе рабочисен ĕçтухăçлăхĕ кирлĕ пек пулса пыман.

Матвейев тракторсем йусанă чухне кирлĕ материалсене тата питех те кирлĕ запаслă пайсене тупса пама тăрăшман.

Хăйне хушнă ответлă ĕç çине ытла та çийелтен пăхнипе Матвейев машинă-трактор мастерскойĕн ĕçне йапăхтарнă. Маçтерской тракторсем йусас плана пурнăçа кĕртсе пыраймасть.

Матвейева хаљ ĕçрен кăларнă. Анчах та унăн начар ĕçĕн йулашкийĕсем мастерскойра пур-ха.

Чăваш АСС Республикĕн Çĕрĕç Халăх комиссариачĕн планĕ тăрăх, Канашри машинă-трактор маçтерскойĕн 310 трактор йусамала. Февралĕн 1-мĕшне 170 мотор çеç йусанă. Çуракине тухас срук кĕскелсех пырать. Çапах та машинă-трактор маçтерской тракторсене йусассине хăвăртлатмасть.

Маçтерской тракторсене тата йалхуçалăхĕнчи ытти машинсене йусас ĕçе кайа йулса туса пыни, паллах, вăл çураки умне çитсе тăрсан, колхозсене ĕçе организацилĕн тухма чарса тăма пултарать, тракторсене тата ытти йалхуçалăх машинисене йусама Канашри маçтерской çумне çирĕплетнĕ республикăри колхозсене пысăк чăрмав тума пултарать.

Чăваш АСС Республикĕн Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕ Канашри машинă-трактор маçтерской ĕçне тĕрĕслесе ăна пулăшса пымасть, ăна оперативлăн йертсе пымасть, Çавăн пекех Çĕрĕç Халăх комиссариачĕ маçтерской тракторсем йусама кирлĕ материалсем тата питех те кирлĕ запаслă пайсене те çителĕклĕн тупса памасть.

Çĕнĕ директорăн Жарков йулташăн халех МТМ ĕçне лайăхлатса йусамала. Рабочисене ĕçлеме условисем туса памала, рабочисем хушшинче социалисăмлă ăмăртупа ударничествăна организацилемеле, маçтерской ваљљи запаслă пайсем тата материалсем çителĕклĕн тăратма тăрăшмала. Тракторсем йусас ĕçри прорыва пĕтермеле.

Пронин.

Çĕнĕ пÿртсем лартрĕç

Мăн-Йĕкетри „Хĕрлĕ Октябер" колхоз (Йĕтĕрне районĕ) 1937 çулта пысăк тухăçлă тырпул туса илчĕ.

Кашни колхозник семйине 300-500 пăт тĕштырă тивет.

Çакна пула 3 колхозник хăйсене ваљљи пысăк та илемлĕ пÿрт туса лартрĕç.

Т. Йарандайкин.

МИХ. ШОЛОХОВ

ЛĂПКĂ ДОН

(Иккĕмĕш сыпăк)

Ирхи сутă ÿкнĕ кĕл тĕслĕ пĕлĕт çинче сайра çăлтăрсем йăлтăртатаççĕ. Пĕлĕтсем айĕнчен çил вĕрет. Дон çийĕпе кайри ура тăрриж тĕтре сÿрет, шурă чуллă ту тайлăмĕ çийĕпе сарăлса пуççăр кăвак çĕлен йевĕрлĕн авăрсене шуса анать. Сулахай çыранăн айлăмлăхĕ, хăйăрсем, вăрманпа карталаннă пĕчĕк кÿлĕсем, пырса кĕме çук хăмăшлăх, сывлăмпа витĕннĕ вăрман—çаксем пурте пĕлĕт çине ÿкнĕ елес-мелес сивĕ шуçăм çутипе йалкăшса тăраççĕ. Тавралăх хыçĕнче, пуçне кăтартмасăр, хĕвел тунсăхлать.

Мелеховсен куренĕнче пуринчен малтан Пантелей Прокофйевич ыйăхран сиксе тăчĕ. Хĕрес тĕррисем туса тĕрленĕ кĕпи сухавине утнă çĕртех тÿмелесе, крыљца çине тухрĕ. Курăк пусnă килхушши кĕмĕл сывлăмпа витĕннĕ. Тăкăрлăка выљăххисене кăларса йачĕ. Тарйе айалти кĕпе вĕççĕнех ĕнесем сума чупса иртсе кайрĕ.

Унăн шурă çара ури хырăмĕсем çинче ĕне ырри йевĕрлĕн сывлăм сирпĕнчĕ, курăк çийĕн килкарти урлă таптанчăк йĕр выртса йулчĕ.

Пантелей Прокофйевич Тарйе урипе таптаннă курăк йепле тÿрленнине пăхкаласа тăчĕ те курницана кĕчĕ. Уçса пăрахнă чÿрече йанахи çинче палисадник тăмĕнчи чийесен çурăлса тăкăннă чечек çÿлĕсем чунсăррăн хĕрелсе выртаççĕ. Кĕркури аллисене валитах уçса йанă та çывăрать.

— Гришкă, пулла пырăтăн-и?

— Е-е?—пăшăлтатса ыйтрĕ лешĕ, унтан кравать çинчен урисене усса йачĕ.

— Кайар, кайар шуçăмла.

Кĕркури, анаслакаласа, ĕç вăхăтĕнче тăхăнмали шăлаварне пăтаран туртса антарчĕ, унăн вĕçĕсене шурă чăлха ăшне çавăрса чикрĕ, унтан хăй çине уртса йанă гирикăн тавăрăнса тăракан хыçне тÿрлетсе нумайччен ашпаланса тăхăнса тăчĕ.

— Анне пулă йăпатмалине пĕçернĕ-и?

— Пĕçернĕ. Кай баркас патне, еп халех.

Старик кĕпе ăшне кăмакана лартса пĕçернĕ тутлă шăршлă ыраш йачĕ, тăкăннă пĕрчисене тирпейлĕн ывăçĕ çине шăлса пуçтарчĕ, унтан, сулахай ури çинеле тайăнса, шыв хĕрринеле уксаклаcа кайрĕ. Кĕркури баркас çинче тăрмаланса ларать.

— Аçтала тытас?

— Хура çыр патне. Йарса пăхар ав кукăр тункатан çывăхне, пĕркун ларнă вырăна.

Баркас, сăмсипеле çĕре шăйăрттарса шыв çине кайса ларчĕ, çыран хĕрринчен уйăрăлчĕ. Йухăм шыв ăна суллантаркаласа, айăккăн çавăрма тĕрмешсе, анатала йухтарса кайрĕ. Кĕркури ишмĕсĕрех кĕсменпе хÿре тытса пырать.

— Иш, штолĕ.

— Ак варрине çурса тухатпăр.

Баркас, шыв хăвăртлăхĕ урлă каçса кайса, сулахай çыранăн йенне сулăнчĕ. Хуттăртан вĕсене шыв тăрăх йанраса килекен автан сассисем хăвалаcа çитрĕç. Баркас, хăйĕн айăккипе шыв çийĕнче касăлса тăракан кимĕрчеклĕрех хура çыра чĕртерсе, хуран пек çавракана пысăк шырлан çумне пырса чарăнчĕ. Çыран хĕрринчен пĕр пилĕк чалăшра шыва путнă хураман арман-чарман турачĕсем курăнса тăраççĕ. Ун йĕри-таврала çавраçйухăм хăмăр кăпăк чăмаккисене хăвалать.

Кĕркурийе ашшĕ:

— Ес сÿт, а епĕ пулăсене йăпатма пуçлам,—тесе пăшăлтатрĕ те пăсланса тăракан чăм тути ăшне аллаппине чиксе йачĕ.

Пĕçернĕ тырă, такам çурма-саслăн — „шик!" тесе пăшăлтатнă пек, шыв çине пырса сирпĕнчĕ. Кĕркури вăлта çине кÿпченĕ тырă пĕрчисем тирчĕ, кулса илчĕ.

— Тытăн, тытăн, пулă, пысăкки те, пĕчĕкки те. Шыв çине йункăн-йункăн пулса ÿкнĕ вăлта çиппи хĕлĕх пек туртăнчĕ, унтан вăлта шыв тĕпне пырса перĕнсенех, каллех пушанчĕ. Кĕркури вăлти хуллин вĕçĕ çине урипе пусса хĕстерчĕ те, хускалас мар тесе, асăрханса, аллине тапак йенчĕкĕ патне чиксе йачĕ.

— Ĕç пулмасть, атте... Уйăх катăлнă.

— Шăрпăк чиксе килтĕн-и?

— Аха.

— Чĕрт.

Старик чĕлĕмне тивертрĕ, шыври кукăр тункатан леш йенне хирĕнсе ларнă хĕвел çине пăхса илчĕ.

— Сазан, вăл тĕрлĕрен лекет. Тепĕр чух, уйăх пĕтсессĕн те килсе кĕрет.

— Илтетĕп, вак-тĕвек пулăсем вăлта çиппи урлă касса касса кайаççĕ,—сывласа илчĕ Кĕркури.

Баркас айăккинче шыв шăпăлтатса хумханчĕ те, икĕ аршăн тăршшĕ сазан, пăхăртан шăратса йанă йевĕрлĕскер, кукăртса хунă хÿрипе шыва икĕ пайа çапса уйăрса, çÿлеле сикрĕ. Çав вăхăтра шыв сирпĕнчĕкĕсем баркас çине тăкăнчĕç.

— Халĕ кĕт!—Пантелей Прокофйевич саннипеле йĕпе сухалне шăлса илчĕ.

Шыва путнă хураман шыв айĕнчи чĕнех чармакланса тăракан йуплĕ туратисем хушшинчен пĕр вăхăтрах икĕ сазан сиксе тухрĕç; виççĕмĕшĕ, пĕчĕкрех-хи, сывлăшпала пĕтĕрĕнсе сине-синех [illegible] [illegible] çыр çийĕпе сиксе илчĕ.

Чăтăмлăхĕ пĕтнипе Кĕркури хутпа çавăрнă чикаркăн йĕпенсе кайнă вĕçне чăмлать. Ирхи хĕвел çур йуман çÿлĕшне çити хăпарнă. Пантелей Прокофйевич пулă йăпанкăчине пĕтĕмпех пĕтернĕ те, тутисене кăмăлсăррăн çавăрса çыртса, вăлта хуллин хусканми вĕçĕ çине сÿрĕккĕн пăхса ларать.

Кĕркури чикаркă тĕпне сурса кăларса пăрахрĕ, вăл йепле хăвăрт ÿкни çине çиллĕн пăхса йулчĕ. Хăй ăшĕнче вăл хăйне кăвак çутăлах тăратнăшăн, çывăрма паманшăн, ашшĕпеле йатлаçать. Выçварла тапак туртнăран, çăвартан ĕнтнĕ сысна шăрчĕ шăрши кĕрет. Анчах ывăçпала шыв ăсса илме пĕшкĕнмеччĕ çеç, çав вăхăтра вăлта аври, шывран çур аршăн çийелеле тухса тăраканскер, вăрахăн сулланса илчĕ, йеринен айалала шуса анса кайрĕ.

— Туртса кăлар!—сывласа йачĕ старик.

Кĕркури вĕткеленсе ÿксе аврине хăй патнеле туртрĕ, анчах та унăн вĕçĕ шыва чăрласа путрĕ, алăпа тытнă вырăнтан кăшăл пек авăнса кайрĕ. Çирĕп, хĕрлĕ-кăчкă йăвăççинчен тунă вăлта аврине çавтери пысăк вăй çăл тарасиçе çавăрса туртнă пек айалала туртма пуçларĕ.

— Ан йар!—йăнăшса илчĕ старик, баркаçа çыран хĕрринчен тĕрте-тĕрте йарса.

Кĕркури вăлта аврине пĕтĕм вăйран çĕклеме пăхрĕ, анчах çĕклеймерĕ. Вăлтан хулăм çиппи çатлатса кăна татăлса тухрĕ.

— Ну-и шыв вăкăрĕ!—темиçе хутчен тĕ пăшăлтатаса илчĕ Пантелей Прокофйевич, аллинчи вăлта йĕппине нийепле те йăпаткăчĕ çине лектерейменсĕр.

Хумханнăн кулкаласа, Кĕркури вăлта аврине çĕнĕ çип çыхрĕ, шыва пăрахрĕ. Вăлта анчах шыв тĕпне çитсе перĕнчĕ, авăр вĕçĕ авăнса та кайрĕ.

— Акă вăл, есрелĕ!—савăнăçлăн кулса йачĕ Кĕркури, йывăр [illegible] ыткăнакан пулла шыв тĕпĕнчен аран-аран туртса уйăрса.

Вăлта çиппи, вăрăмăн шĕпĕлтетсе, шыва çурса тухрĕ, ун хыççăн чалăш та симĕсрех пайракалă шыв туртăнса йулчĕ. Пантелей Прокофйевич пуклакрах пÿрнисемпе шыв ăскăчин аврине хыпашлакаласа илчĕ.

— Çавăрттарса йар ăна шывала! Хытă, тыт, атту пăчкипе шартлаттарать!

— Ан хăра!

Хĕрлĕрех сарă тĕслĕ пысăк сазан çийеле тухрĕ, шыва кăпăлклантарчĕ, унтан пуклак çамкалă пуçне айалала пăрса каллех шыв тĕпнеле чăмрĕ.

— Туртать, аллăм пĕлми пулчĕ... Чим, тăхта!

— Ан йар, Гришкă!

— Йамастă-ă-п!

— Асту, баркас айне ан тарт!.. Асту!

Кĕркури, сывлăш çавăрса илчĕ те, хăйаккăн выртакан сазана баркас патне туртса илчĕ. Старик ăна ăскăчăпа ăсса илме тăнăччĕ, анчах сазан, йулашки вăйа пухса, каллех шыв тĕпнеле тапса сикрĕ.

— Пуçне çÿлеле çĕкле! Ан тив, çиле çăтса илтĕр, вара хăйех лăпланĕ.

Кĕркури, халран кайнă сазана çийеле кăларса, каллех баркас патне туртса илчĕ. Пулли, сарлакан уçăлса тăракан çăварĕпе анаслаcа, сăмсипеле кимĕ айакки çумне çитсе перĕнчĕ те, авкаланса тăракан хĕрлĕ ылттăн çунаттисене йăлтăртаттарса илчĕ.

— Ехе-е, çапăçса пĕтеретĕн-и!—тесе кăшкăрса йачĕ Пантелей Прокофйевич, ăна ăскăч çине йăвантарса.

Тепĕр çур сехет хушши ларчĕç. Сазансен вăрçи тамалчĕ.

— Пуçтар, Гришкă. Йулашкине кÿл-тĕмĕр пулас, урăх кĕтсе илейес çук.

Пуçтарăнчĕç. Кĕркури баркаса çыран хĕрринчен тĕртсе йачĕ. Çурма çула çитрĕç. Кĕркури ашшĕ пичĕ тăрăх вăл темĕн каласшăн [illegible] пуррĕ, анчах старик нимех те калаçмасăр сăрт айĕнчи хуттăрсен кил-картийĕсем çине пăхкаласа пырать.

— Есĕ, Кĕркури, акă мĕн...—калама тытăнчĕ вăл ÿрĕк-сÿрĕккĕн, ури айĕнче выртакан михĕ çиххине хыпашласа, — асăрхатăп та, есĕ Астаховсен Укçинипе...

Кĕркури хĕп-хĕрлĕ пулса кайрĕ, çавăрăнса ларчĕ. Кĕпе çухавийĕ, хĕвел хĕртнипе пиççĕ кайнă кĕре мăйĕ ăшне касăнса кĕрсе, шурă йарăм сиктерсе кăларчĕ.

— Асту, йĕкĕт,—хыттăн та хăйаррăн малала пуплеме тытăнчĕ старик, — еп санпала кун пек кăна мар калаçатăп. Çтепан пирĕн кÿршĕ, ун арăмĕпе ашкăнма ирĕк памăп сана. Ку ĕç темле çылăх патне те илсе çитерме пултарать, а епĕ сана катаранах астутаратăп: курсассăн—пăрахса çаптарăп!

Пантелей Прокофйевич аллисене чăмăртарĕ, чарăлса кайнă куçĕсемпе ывăлин питĕнчи йун йепле шупкалса пыни çине пăхрĕ.

— Елеклеççĕ!—персе йачĕ Кĕркури шыв айĕнчен тухнă пек аран илтĕнекен сасăпа, унтан тÿп-тÿрĕ ашшĕн кăвакрах сăмси сыппи çине пăхрĕ.

— Шăлнă çырт ес!

— Сынсем тем те калаçĕç...

— Чарăн, йытă çури!

Кĕркури вăйпа кĕсменлеме тытăнчĕ. Баркас сике-сике малала шăвать. Кимĕ хÿринчи шыв авкаланса пăкăљтетсе ташласа пырать.

Пристăнь патне çитиччен иккĕшĕ те чĕнмесĕр пычĕç. Çыран хĕррине çывхарса çитсен ашшĕ татах астутарчĕ:

— Асту, ан ман, йтлеместĕн пулсан—пайанхи кунран пуçласа пĕр вăйа та кăлармăп. Кил-картинчен пĕр утăм та тухнă ан пултăр. Çапла!

Шарламарĕ Кĕркури. Баркасне çыран хĕррине тĕкĕнтерсе:

— Пуллине хĕрарăмсене памала-и?—тесе ыйтрĕ.

— Хуçасене кайса сут, — çемçелнĕ старик,—тапак ваљљăх укçа тулĕ.

Парти членĕсем çине тимлĕн пăхмала

Епĕр, ПСК(б)П Тĕпком Пленумĕн решенисем çинчен çырса, йанварĕн 27-мĕшĕнчи умстатйара: „Пирĕн хаçатсем те тасаран коммуниссенех вырăнсăр тăшман йатне пама пуçланă. Сăмах та çук, пирĕн пичет, уйрăмăн—„Чăваш Коммунĕ“ хаçат та уйрăм коммуниссене, работниксене вырăнсăр тăшман йатне панисем пулнă. Кунта „Чăваш Коммунĕ“ хаçата йертсе пыракан коммуниссем те айăплă“, тенĕччĕ.

Вăл чăнах та çапла пулнă. 1937 çулти нойаберĕн 23-мĕшĕнчи умстатйара (парти активĕн пухувĕ çинчен) партипе советăн йертсе пыракан органĕсене вырнаçнă тăшмансем çинчен каланă чухне, редакци Н. В. Жуков йулташа та тăшмансен, троцкиссемпе буржуалă националиссен картине кĕртсе лартнă. Кунта редакци сахалтан та, парти Тĕпкомĕ, Сталин йулташ: кашни коммунис çине уйрăмăн, тимлĕн пăхмала тесе кăтартса панине хисепе илмен. Ĕç çине тĕплĕн виçсе пăхас вырăнне, парти активĕн пухувĕнче каланисене большевикла анализ тăвас вырăнне, редакци уйрăм коммунис-карйериссен сенсацилĕ выступленийĕ хыççăн кайнă.

Жуков йулташăн айăпĕсем пулнă. Вăл ПСК(б)П Обкомĕ çумĕнчи пуçламĕш парторганизацичи партком секретарĕ пулса ĕçленĕ. Вăл, паллах, Обком аппаратĕнче ларнă троцкиссен, буржуалă националиссен тăшманла ĕçĕсемшĕн ответлă. Ăна куншĕн хăй вăхăтĕнче кирлĕ пек айăплана—ПСК(б)П Обком Пленумĕн составĕнчен, унтан кайран Хула комитет пленумĕн составĕнчен кăларнă. Анчах çакă вăл, паллах, никама та Жуков йулташ çумне тăшман йарлăкне çыпăçтарма сăлтав паман.

Шупашкар Хула комитечĕ 1938 çулти йанварĕн 27-мĕшĕнче хăйĕн 1937 ç. декаберĕн 21—22-мĕшĕсенче пулса иртнĕ бюро ларăвĕнче Жуков йулташа хытă йатламала туса йышăннă решенине пăрахăçа кăларчĕ.

Тăшмансем уйрăмах пичетпе усă курма тăрăшаççĕ. Вĕсене хăш чухне çавна тума май та килет. Карйерис-коммуниссем те çавнашкалах.

Нойаберĕн 26-мĕшĕнче „Чăваш Коммунĕнче“ Халăх тăшманĕн йулашкисене тĕппипех кăкласа кăларар“ текен статйа пичетленчĕ. Вăл статйара Семенов йулташ, парти членĕ, Вăрнар райĕçтăвкомĕн социаллă пулăшу пайĕн пуçлăхĕ (унччен—Вăрнарти зоотехникум пуçламĕш парторганизацире парторг пулса ĕçленĕ) çапла çырать:

Техникум директорĕ пулнă Лонгвиненкон тăшманла ушкăнĕнче вĕренӳ пайĕн пуçлăхĕ пулнă Трйаков та тăнă. Вăл, парти билечĕпе витĕнсе, Лонгвиненко кăтартăвĕсене пурнăçа кĕртекенни, самокритикăна пусарса, тăшмансене хӳтĕлесе тăраканни пулнă. Трйаков—кулак йăхĕнчен тухнăскер (Улăкасси, Йĕпреç районĕ). Ахаль мар ĕнтĕ техникумра ăна тăрă шыв çине кăларасси сисĕнсен, Трйакова хăвăртрах Çĕрĕç халăх комиссариачĕн аппаратне илсе кайрĕç. Трйаковăн тăшманла ĕçĕсене халĕ те нĕçне çитийех тăрă шыв çине кăларман-ха, ăна ĕçрен кăларнă та лăпланнă. Ку вăл ытла та çемçешкеле пулать.“

Калас пулать, статйара кăтартнă фактсене тĕрĕслеме вырăна редакциреи йанă работник те Трйаков йулташ çинчен елеклениие „тавçăрса илеймен“, çапла вара Трйаков йулташа тăшман йарлăкне панă, нимĕн сăлтавсăрах „кулак йăхĕнчен тухнă“ çын туса хунă.

Трйаков йулташ Вăрнарти зооветтехникумра 1933 çултанпа вĕренӳ пайĕн пуçлăхĕ пулса ĕçленĕ. 1931 çултанпа—парти членĕ. Обком решенийĕ тăрăх ийуль уйăхĕнче Трйаков йулташ Çĕрĕç Комиссариатне кадрсем хатĕрлекен пайĕн начальникĕ пулса ĕçлеме куçать. Пĕр 3 уйăх ĕçлесен, ăна Вăрнарти зооветтехникумра 1940 тенкĕлĕх растрата тунă тесе Серебренников йулташ ĕçрен кăларать. Мĕнле растрата пулнă-ха вăл çав 1940 тенкĕ? Куратăри, авă, вăл, Трйаков йулташ, директор вырăнĕнче ĕçленĕ чухне 6 уйăх ытларах вăхăтшăн ĕçукçи хушшинчи уйрăмлăха 750 тенкĕ илнĕ, Вăрнар йалпоне, студентсен столовăйĕ валли çимĕçсем илнĕшĕн, 900 тенкĕ тӳленĕ, тата совместительствă йĕркипе учхозра ĕçленĕшĕн 290 тенкĕ илнĕ. Çак факт Вăрнар районĕнчи халăх сучĕн следователĕшĕн, Красильникова йулташшĕн, Трйаков йулташа, ĕçне тĕрĕслесе пăхмасăр, ыйтса пĕлмесĕр хуптарса лартма çителĕклĕ пулнă. Халăх следователĕн саккунсăр ĕçне Кровйаков прокурор санкци панă. Парти райкомĕ коммунисăн кунçулĕпе интересленмен. Ăна айăплакан материалсене тĕрĕслесе пăхман. Пуçламĕш парторганизаци Трйаков йулташ çинчен, хаçатсем çинче материалсем пулнă пулсан та, парторганизаци пухувне лартса сӳтсе-йавма шутламан. Судпа следстви органĕсем ĕç çине бюрократла-чиновникле пăхнине пула, райком коммунисăн кунçулĕпе интересленменнине пула Трйаковăн икĕ уйăх хушшине йахăн ирĕксĕр çĕрте лармала пулнă.

Çакăн пек иртĕнсе, ашкăнса ĕçлес йĕркесене пĕтермеле, парти членĕсем çине тимлĕн пăхмала, вĕсен кунçулĕпе интересленмеле, вĕсем мĕнпе сывласа пурăннине пĕлмеле.

Паллах, пирĕн тӳрĕ коммуниссене, нимĕн айăпсăр айăпланă коммуниссене тӳрре кăлармала. Çавăнпа пĕрлех тасаран коммуниссем çинчен елек саракан карйерис-коммуниссене парти ретĕнчен хăваласа, парти организацисене—партипе халăхăн чăн-чăн тăшманĕсене тăрă шыв çине кăларса пĕр çын йулмиччен пĕтерме мобилизацилемеле. Çакăн пек пирĕн задач.

Хĕрлĕ Çарпа Тинĕс-Çар флочĕн 20 çулхи йубилейĕ умĕн

Ленинград Хĕрлĕ Çар кунне хатĕрленет

Ленинградра Хĕрлĕ Çарăн 20-мĕш çулхи уйавне иртерме хатĕрленеççĕ. Хĕрлĕ Çар çуртĕнче допризывниксен пухувĕсем пулса иртеççĕ. Вĕсемех „Ленин в Октябре“, „Балтийцы“ тата „Волочаевские дни“ кинокартинăсене коллективлăн пырса пăхаççĕ. Ленинградри çамрăксем йĕлтĕрлĕ походсем туса иртереççĕ. Чылай учрежденисенче Хĕрлĕ Çар историне вĕренеççĕ. Лекторинче, Максим Горький йачĕпе тăракан культура çуртĕнче тата тĕрлĕ клубсенче уйав умĕн Хĕрлĕ Çар историйĕ çинчен 300 йахăн лекцисем пулаççĕ. Ленинградри киностуди уйав умĕн çĕнĕ кинокартинăсем кăларма хатĕрленет. Композиторсемпе художниксем уйав кунĕсем валли уйрăм музыкăлă номĕрсем, выставкăсене таратма картинăсем хатĕрлеççĕ.

А. Николайев.

Допризывниксем çар ĕçне вĕренеççĕ

Йанвар уйăхĕнче Сĕнтĕрвăрри районĕнче Услă Пукаш йалĕнче 1917—1918 çулсенче çуралнă çамрăксене çар ĕçне вĕрентме пухрĕç. Вĕсем 15 кун хушши вĕренчĕç. Çак икĕ эрне хушшинче 60 допризывник ПВХО значокне илчĕç, 16 допризывник Ворошиловла тĕл перекенсен значокне илчĕç.

В Сидйаков.

Командăсем уйăртăмăр

ВĂРМАР. Кавалти вăтам шкулта Хĕрлĕ Çарпа Тинĕс Çар флочĕ 20 çул тултарнине уйавласа иртерес май, çак кунсенче отрйадсенче тĕл перекенсен командисене уйăртăмăр.

Çак кунсенчен пуçласа отрйадсенче пĕчĕк калиберла винтовкă пайĕсене вĕренме тытăнтăмăр.

М. Иванов.

Стахановецсен тухăçлă ĕçĕсем

КАНАШ. (Хамăр корр.) Вагонсем йусакан заводри стахановецсем йанвар уйăхĕнче пысăк çитĕнӳсем тунă. Прессовщик Лашманов йулташ йанварти плана 538 процент тултарса, ĕç укçи 927 тенкĕ те 95 пус илнĕ. Çавăн пекех тимĕрç Миронов йулташ уйăхри плана 315 процент тултарнă. Вăл 590 тенкĕ ĕçлесе илнĕ. Тимĕрç Фомин йулташ плана 341 процент тултарса, 642 тенкĕ, штампсем тунă çĕрте ĕçлекен тимĕрç Калинцев йулташ 662 тенкĕ ĕçлесе илнĕ.

ХĔРЛĔ ÇАРПА ТИНĔС-ÇАР ФЛОЧĔ 20 ÇУЛ ТУЛТАРНĂ ТĔЛЕ.
ӲКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: „Приçагă“. Мельников фото-ӳкерчĕкĕ. Кийев. (Фотоискусствăн Пĕтĕм Сойузри пĕрремĕш выставки).

Сойузфото репродукцийĕ.

ССР Сойуз Аслă Совечĕн депутачĕн М. М. Сахйанăва йулташăн суйлавçăсем умĕнчи отчочĕ

ИШЛЕЙ. Çĕнйал Покровски йалсоветĕнчи утă йалтан пухăннă суйлавçăсен аслă пухувĕнче ССР Сойузĕн Аслă Совечĕн депутачĕ М. М. Сахйанова йулташ ССР Сойузĕн Аслă Совечĕн пĕрремĕш Çессийĕн ĕçĕсем çинчен каласа пачĕ. Вăл хăйĕн сăмахĕнче Çессине социалисăмла çĕршыври мĕн пур нацилĕ республиксенчен пухăннă депутатсене социалисăмла çĕршывăн аслă столици—Мускав хулинчи рабочисем, стахановецсем тата интеллигенци питĕ те пысăк, ăшă кăмăлпа кĕтсе илни çинчен каларĕ.

М. М. Сахйанова йулташ хăйĕн докладĕнче тăван çĕршывра пурăнакан ĕçсынисем пĕр тăванлă, пĕр шухăшлă халăх пулса тăни тата ССР Сойузĕн Аслă Советне суйланă чухне суйлавçăсем суйлава 97 процент ытла хутшăнни капиталисла çĕршывсемшĕн, фашиссемшĕн куçĕсене шурă илтерекен факт пулса тăчĕ, терĕ.

Вăл хăйĕн докладĕнче ССР Сойузĕн Аслă Советне суйланă депутатсен социалисăмла çĕршыва татах тĕреклетме, ĕçсынисен культурлăхĕпе пурнăçне темиçе хут хăпартма хăйулă шанчăк пуррине кăтартрĕ.

Сахйанова йулташ докладне итленĕ хыççăн колхозниксем чылай тухса калаçрĕç. Суйлавçăсем уйрăмăнах Çессинче Жданов йулташ каланă сăмаха тата Тинĕс-Çар Халăх Комиссариатне организацилениие ырларĕç.

Пухура „Çĕнйал“ колхозăн 1-мĕш бригадăн бригадирĕ Ильбаторкин йулташ çуракине лайăх хатĕрленсе иртерес тĕлĕшпе конкретлă обйазательствăсем илчĕ.

Çавăн пекех Çĕнйал Покровски йалсоветĕнчи йалсенчен пухăннă суйлавçăсен пухувĕнче Краснодар крайĕнчи Щербиновски районĕнчи колхозниксем чĕнсе каланине сӳтсе йаврĕç.

Пухура мĕн пурĕ 200 çын ытла пулчĕç. Вĕсем кăçал вăйлă тырпул туса илессишĕн пĕтĕм вăйа хурса ĕçлеме пулса резолюци йышăнчĕç.

Л. Павлов.

П. Д. Краснов йулташ хăйĕн суйлавçисем патĕнче

ТРАК, февралĕн 4-мĕшĕ (телефон тăрăх). Кăнтăрла иртсен 3 сехетре вăтам шкулăн залĕнче ССР Сойузĕн Аслă Совет суйлавне иртернĕ вăхăтра ĕçленĕ довереннăйсемпе агитаторсен, йалсоветпа колхоз председателĕсен, колхозри стахановецсемпе ударниксен канашлувĕ пулса иртрĕ. Канашлува пурĕ 200 çын ытла пухăннă. Канашлу пĕр ыйту сӳтсе-йаврĕ Вăл: Аслă Советăн пĕрремĕш Çессин ĕçĕсем çинчен. Ку ыйтупа Трак районĕнчи колхозниксем суйланă ССР Сойузĕн Аслă Совет депутачĕ Петр Дмитрийевич Краснов йулташ доклад туса пачĕ.

Краснов й. хăйĕн докладĕнче ССР Сойузĕ 20 çул хушшинче тунă çитĕнӳсем çинчен тата Аслă Советăн пĕрремĕш Çессин ĕçĕсем çинчен каларĕ.

— Çессире питĕ пысăк ĕçсем турăмăр. Есĕр хушнă ыйтусене çирĕплетрĕмĕр. Маншăн Мускав хули, Кремль, Сталин йулташпа унăн йоратнисĕсене курни—ĕмĕр манми савăнăç пулчĕ. Епĕ Сталин йулташа тата унăн çывăх соратникĕсене курсан хытă алă çупрăм. Çавă алă çупни пĕтĕмпех—мана суйланă çынсем алă çупни пулĕ, тесе шутлатăп,—тет Краснов йулташ. Вăл Çессин ĕçĕсем çинчен тата Çессин мĕнле иртсе пыни çинчен тĕплĕн каласа пачĕ.

Пухура тухса калакансем пур те çуракине хатĕрленсе çитсе, кăçал вăтам шутпа гектартан 120 пăт тĕштырă туса илме пулчĕç, чукунçул ĕçĕнче тăрăшса ĕçленĕшĕн илнĕ хĕрлĕ йалава аларан вĕçертместпĕр, терĕç вĕсем.

Ник. Петров.

С. Талхир.

ССР Сойузĕн Аслă Совечĕн пĕрремĕш Çессийĕн решенийĕсене сӳтсе йаваççĕ

ТУТАРКАС. Апчар йалсоветĕнче ССР Сойузĕн Аслă Совечĕн пĕрремĕш Çесси решенийĕсене ăнлантарса парассине лайăх йĕркелерĕç. Ку тĕлĕшпе йалсовет çумĕнче агитгруппă организациленĕ. Çак кунсенче „Сеялка“ колхозра уйрăм пухусем туса, ватă колхозниксемпе колхозницăсем хушшинче Çессн ĕçĕсем çинчен ăнлантарса пачĕç.

М. Исайев.

ТĂЗАЙ. „Красная Чувашия“ колхозра кашни бригадăрах ССР Сойузĕн Аслă Совечĕн пĕрремĕш Çесси решенийĕсене вĕренеççĕ. Колхозниксемпе колхозницăсем Çесси решенийĕсене ырлаççĕ. Кăçал иртнĕ çулхинчен ытларах тырпул туса илессишĕн çине тăрса ĕçлеме хăйсем çине обйазательствăсем илеççĕ.

К. Лазарев.

Колхозниксем пушă вăхăта усăллă иртереççĕ

Паваркассинчи (Çĕрпӳ р.) вулав çурчĕ иртнĕ çулсенче начар ĕçлечче. Вулав çурчĕн пуçлăхĕнче Львов йулташ ĕçлеме тытăннăранпа ĕç пĕтĕмпех урăхланчĕ. Вулав çуртне кĕрсен илемлĕх куç умĕнче. Радио калаçать, стена çумĕнче тĕрлĕрен плакатсем, лозунгсем, çулпуçĕсен сăнĕсем. Сĕтелсем çинче тĕрлĕрен хаçат-журнал.

Вулав çурчĕн библиотекинчи кĕнекесен шучĕ те чылайах ӳсрĕ Кунта Пушкин, Лермонтов, Фурманăв, Горький писателсен произведенийĕсем çителĕклĕ.

Вулав çурчĕ çумĕнче тĕрлĕрен кружоксем организациленĕ. Уйрăмăнах драмкружок йĕркелĕ ĕçлесе пырать. Кружокра 29 çын. Драмкружок членĕсем йанвар уйăхĕнче Кăлканăн „Аниса“, Осиповăн „Айдар“ пйесисене лартса пачĕç. Колхозниксем спектакль курма пысăк хаваслăхпа пухăнаççĕ. Халĕ „Айдар“ пйесăна çывăхри йалсене тухса лартса пачĕç.

Н. Йефимов.

Тугисене çырткаласа, Кĕркури ашшĕ хыçĕнчен утрĕ. „Хӳреме тыт, атте. Тăлласа лартсан та, пайан вăййа тухатăпах“—тесе шутларĕ вăл, ашшĕн чăнкă ĕнсине куçĕсемпе хайаррăн кăшласа.

Килте Кĕркури сазан хуппи çинчи хăйăра тăрăпса çуса йачĕ, ăна майĕнчи шăтăкĕсенчен хулă çине тирсе хучĕ.

Хапхи умĕнче хăйпе пĕр тантăш тахçанхи тусне Митькă Коршунова, тĕл пулчĕ. Çамки айĕнчи хĕсĕк кушăксенчен чăрсăртарах çавракă сарă куçсем çулланса тăраççĕ. Куç шăрçийĕсем кушакăнни пек, выльанмасăр тăраççĕ, çавăнпа та Митька куçĕсем йепле пăхнине ăстуса йулма та çук.

— Ăçта кайан пулăпа?

— Пайан тытни. Хуçасене кайса паратăп.

— Моховсене-и?

— Çавсене.

Митькă пулă мĕн чухлĕ тытнине, куç виçипех сăнаса илчĕ.

— Пĕр вунпилĕк кĕрепенке-и?

— Вунпилĕк çурă. Писмен çинче турттартăм.

— Ил мана та хăвăнпа пĕрле.

— Кайар...

— А мăкăрычне?

— Йунеçĕпĕрçке, мĕн пустуй пăкăлтатмала.

Кăнтăрлахи кĕлĕрен урама халăх кĕпĕрленсе тухрĕ.

Çул тăрăх виçĕ пĕр тăвансем, Шамиль тесе чĕнекенскерсем, йунашар утса пыраççĕ.

Асли, хулсăр Елекçей, варринче пырать. Мундирăн тăвăр çухавийĕ унăн шăнăрлă мăйне тӳп-тӳрĕ тӳрлентернĕ, кăтраланса тăракан савăл пек сайра сухалĕ теветкеллĕн пĕр йеннелле пăрăнса кайнă, сулахай куçĕ тарăхулăн мăчлатса синкелет. Тахçанах, пăшал пенĕ çĕрте, Елекçейĕн аллинчи винтовки çурăлса кайнă пулнă та затвор татăкĕ питçăмартине ăрăтса пăрахнă. Çавăнтан варах Елекçей куçĕ кирлĕ-кирлĕ мар чух та çапла мăчлатса тăрать; тарăн çĕвĕк, питçăмарти урлă йăраланса каçса кайса, çӳç тăпки ăшне кĕрсе çухалать. Унăн сулахай алли чавса таран татăлса ӳкнĕ, анчах Елекçей хăрах алăпа та чикаркăсем питĕ ăста, нимĕн йăнăшмасăр çавăрать: йенчĕкне чавсипеле сарлака кăкри çумне хĕстерет, шăлĕсемпе кирлĕ таран хут чĕрсе илет, ăна вăлак пек хутлантарать, талакне чĕптĕмлесе илет, унтан пӳрнисене куçпа курма çук выльантарса пĕтерме пуçлать. Курса йулма та ĕлкĕрейместĕн, Елекçей хăйĕн чикаркине çавăрса çăвара чикнĕ те, куçĕпе мăчлаттарса, шăлĕпе чăмласа тăрать, шăрпăк пама ыйтать.

Хулсăр пулин те, чышкăла ун пек çапăçакан хуттăрта та çук. Чышки те ĕнтĕ ытлашши чышкă темелех те мар, çиме йурăхсăр пĕчĕк кавин чăмăркки пек кăна. Пĕрре унăн суха тунă çĕрте вăкăрĕ çине çилленме тивнĕ: чăпăркки ал айĕнче пулман та, пĕррех панă вăл вăкăра чышкипеле—вăкăр çавăнтах суха касси çине тĕшĕрĕлсе аннă, ик хăлхинчен йун тапса тухнă, аран-аран сывлăш çавăрса илнĕ. Ытти тăванĕсем—Мартинпа Прохăр—пĕтĕм вак-тĕвек таранах Елекçейпе пĕр сăнарлă, Елекçей пекех лутака кĕлеткелĕ, йуман пек сарлака, аллисем çеç вĕсен кашнийĕнех пĕрер мăшăр.

Кĕркури Шамильсемпе сывпуллашрĕ, Митькă, мăйĕ шатăрт тăвиччченех пуçне айаккала пăрса, иртсе кайрĕ. Çăварнире, чышкăла çапăçнă чух, хĕрхенмен иккен Елекçей Шамиль Митькăн çамрăк шăлĕсене, пĕррех шăлса илнĕ те çăвар урлă, Митькă çавăнтах атă кĕллисемпе таптанса шăйăрăлса пĕтнĕ симĕс пăр çине икĕ урлă шăл сурса кăларса пăрахнă.

Вĕсемпеле танлашсан, Елекçей çинеçинех куçне пилĕк хутчен мăчлаттарчĕ.

— Сут чурбанца.

— Ил.

— Мĕн чухлĕ ыйтатăн?

— Пĕр мăшăр вăкăр тата çине арăмна парăн.

Елекçей, куçне хĕссе, татăк аллипе сулкаласа илчĕ.

— Тĕлĕнтермĕш, ах тĕлĕнтермĕш! Ох-хо-ха, арăмна... А çурисене илетĕн-и?

— Хăвна пуслăх валли хăвар, унсăрăн Шамильсен йăхĕ пăчланĕ,—шăлне йĕрсе илчĕ Кĕркури.

Плошчĕдре, чиркӳ карти умĕнче, халăх епшкерленсе тăрать. Ушкăн варринче чиркӳ старăсти, пуçĕ тăррииеле хур çĕклеиĕ те: „Пултинĕк. Па-тă-мăр. Кам ытларах?“ тесе кăшкăрашать. Хурĕ мăйне пăркалать, кăвар пек хĕрлĕ куçĕсене курайманлăхпа выльантарать.

Йунашар ушкăнра пĕр кăвакарнă вата старик, кăкри çине хрессемпе медальсем çакса тултарнăскер, аллисемпе сулкаласа калаçать.

— Пирĕн Кĕркури асатте туркка вăрçи çинчен çаптарать,—тĕллесе кăтартрĕ Митькă куçĕсемпе.—Кайса итлер-и?

— Итлесе тăнă хушăра сазан шăршланĕ, кӳпчесе кайĕ.

— Кӳпчесен виçи хутшăнĕ, пире тупăш пулĕ.

Плошчĕдре, хуçăк турталă шыв пичкисем шултăркаса ларакан пушар сарайĕ хыçĕнче, Моховсен пӳрчĕ симĕсленсе ларать. Сарай патĕнчен иртсе пынă чух, Кĕркури лачлаттарса сурчĕ те сăмсине пăчăртаса тытрĕ. Пичке хыçĕнчен, шăлавар тӳмисене тӳмелесе, пĕр старик сиксе тухрĕ—пиçиххине шăл хушшине хĕстернĕ.

— Хӳре вĕçне туй килчĕ-им?—тĕртсе илчĕ Митькă.

Старик йулашки тӳмине тӳмелерĕ те пиçиххине çăварĕнчен кăларчĕ.

— А сана мĕн ĕç?

— Сăмсупа пуçмана сана! Сухалупа! Сухалупа! Штоб карчăку ерне хушшинче те мунчаран ан тăталтăр.

— Еп сана лайăх пуçса йарăп, ствăна!—Кӳренчĕ старик.

Митькă чарăнчĕ те кушакăнни пек куçĕсене хĕвел çине пăхнă чухнехиле хĕстерчĕ.

— Май мар, йепле таса йăхлă етем.

— Йăмлан, йытă çури! Мĕн анчăкланатăн? Йарăп ак чĕнпиçиххипе!

Кĕркури, кулкаласа, Моховсен çурчĕн крыльцине пырса тăчĕ. Крыльца карлăкĕсем пуса-виноградăн йăвă ермешлекĕ ăшĕнче. Крыльца çинче пăчă-пăчă йулхав мĕлке.

— Во, Митри, пурнаççĕ сынсем...

— Хăлăпне те пулин ылттăнланă.

Митькă сарлăк алăкне уçрĕ те тулхăрса йачĕ.—Хай пичке хыçне ларнă асаттене илсе килсе йарасчĕ кунта...

— Кам унта?—кăшкăрса сасă пачĕç вĕсене.

Кĕркури, хăракаласа, малтан кĕрсе кайрĕ. Сăрланă урай хăмисене сазан хӳри шăлса пырать.

— Спре кам кирлĕ?

Хулăран авса тунă йарăнчăк çинче—хĕр. Аллинче пĕчĕк чашăкпа çĕр çырли. Кĕркури хĕрĕн хĕрлĕ тута хĕрри çине нимĕн сăмахсăр тинкерсе пăхать. Ăна пулăшма Митькă сăмах пуçарчĕ. Вăл йĕрсе илчĕ те:

— Пулă илместĕр-и?—тесе ыйтрĕ.

— Пулă? Халех, кайса ыйтам.

Вăл, ури çине тăрса, хулă пукана сулкалантарса хăварчĕ,—çара ура çийĕн тăхăннă тĕрлесе тунă пушмакĕсемпе шаплаттарса утса кайрĕ. Хĕвел çути хĕрĕн шурă кĕпине витĕр çутатрĕ те Митькă унăн тулли урисен тĕксĕм кӳлепине тата айалти кĕпен хумханса пыракан чĕнтĕрне курса йулчĕ. Çара ура хырăмĕсен атлас пек шурă тĕсĕ ăна тĕлĕнтерсех пăрахрĕ, çавра ура тупанĕсенчи ӳт кăна сĕт тĕслĕрех сăрăлса тăрать.

Митькă Кĕркурине тĕртсе илчĕ.

— Пăх-ха, Гришкă, ну йубкă та ĕнтĕ.. Кантăк пек, пĕтĕмпе витĕр курăнать.

Хĕр коридорти алăкран тухрĕ. Хулă пукан çине çемçен пырса ларчĕ.

— Иртĕр мунчăна.

Чĕрне тăррин уткаласа, Кĕркури пӳрте кĕчĕ. Митькă куçне хĕр ури çинчен илсе унăн пуçĕ çинчи икĕ çурма çаврашка уйăрăлса тăракан ылттăн тĕслĕ çӳçĕсем çине пăхма пуçларĕ. Хĕр ăна чарусăр, канăçсăр куçĕсемпе виçсе илчĕ.

— Есĕр кунтисем-и?

— Кунти.

— Кам тавраш-ха апла?

— Коршунов.

— Патăр мĕнле сирĕн?

— Мĕтри.

Хĕр хĕрлĕ пулă хуппи пек чĕрнисем çине тинкерсе пăхрĕ те урисене хăвăрт хуçлатса хăй айнеле туртса илчĕ.

— Хăшĕ сирĕн пулă тытаканни.

— Кĕркури ман тусăм.

— А есĕр пулла çӳретĕр-и?

— Çӳретĕп епĕ те, йекки килнĕ самантра.

— Вăлтапа-и?

— Вăлтапа та тытатпăр, хамăр пек каласан—притугăпа.

— Манăн хамăн та пулла кайса пăхасчĕ пĕрре,—терĕ вăл, кăштах чĕнмесĕр тăнă хыççăн.

— Мĕн-ха вара, кăмăлăр пулсан, кайăпăр.

— Мĕнле майпа тума пулать-ши ăна? Чăнах та, йепле майпа?

— Ыйхăран питĕ ир тăрас пулать.

— Еп тăратăп, вăратма кăна кирлĕ мана.

— Вăратма пулать. А асу?

— Мĕн асу?

Митькă кулса йачĕ.

— Ансăртран вăрă тесе ан шутлатăр. Ситмешшине йытăсемпе тухлаттарса пĕтерĕ.

— Ан ухмахланăр пустуй! Еп кĕтесри пӳлĕмре пĕчченех çывăратăп. Ак çак чӳрече. — Хĕр пӳрнипеле тĕллесе кăтартрĕ.—Ехер ман патăма килетĕр пулсан, чӳречерен шаккăр, вара епĕ тăрăп.

Кухньăран Çасăсем вакланса тухрĕç: хăравçи—Кĕркури сасси, хулăмми, малтанхи—кухаркăн.

Митькă, казак пиçиххийĕн тĕксĕм кĕмĕлне хыпашлакаласа, нимĕн чĕнмесĕр тăрать.

— Есĕр авланнă-и?—ыйтрĕ хĕр, вăрттăн куллине ăшăтса.

— Мĕн тума?

— Так ахалех, пĕлес килет.

— Çук, авланман.

Митькă сарăмсăр хĕрелсе кайрĕ, а вăл хăйĕн куллипе тата çĕре тăкăнса кайнă çĕр çырлисен аврипе выльакаласа:

— Йепле-ха, Митькă, хĕрсем сире йуратаççĕ-и?—тесе ыйтрĕ.

— Хăшĕсем йуратаççĕ, хăшĕсем çук.

— Ка-лăр-ха... А мĕншĕн-ха сирĕн куçăрсем кушак аçин пек?

— Кушак аçин?..—пĕтĕмпех нимĕн калама аптраса çитрĕ Митькă.

— Ийна, шăп çапла, кушакăнни пек.

— Вăл аннерен пулмала... Еп кунта айăплă мар.

— А мĕншĕн-ха, Митькă, сире авлантармаççĕ?

Митькăн самантлăх имении иртсе кайрĕ те, вăл хĕр хăйĕнчен вăрттăн тăрăхланине туйса илсе, куç шăрçисене мăкăльтеттерсе илчĕ.

— Арăм пуласси ӳсмен.

Хĕр тĕлĕннĕ пек пулса куç харшийĕсене карăнтарчĕ, хĕремесленсе кайрĕ, ури çине тăчĕ.

Урамра, крыльца çинче, ура сассисем илтĕнчĕç.

Хĕр куллине пытарса тутипе йейĕлтерни Митькăна вĕлтĕрен пек пырса тиврĕ. Шевровый пысăк ботинкисене çемçен кăштартаттарса, килхуçи, Сергей Платонович Мохов, хăй килсе кĕчĕ. Хăйĕн самăрăлса пыракан кĕлеткине вăл айаккала пăрăнса тăнă Митькă умĕнчен мăнкăмăллăн çĕклесе иртсе кайрĕ.

— Ман патăма-и?—ыйтрĕ вăл Митькăран иртсен, пуçне çавăрса пăхмасăрах.

— Вĕсем, атте, пулă илсе килнĕ.

Пушă алăсемпе Кĕркури тухрĕ.

ИСПАНИРИ ФРОНТСЕНЧЕ

ЦЕНТРИ ФРОНТ.

Гавас агентстви пĕлтернĕ тăрăх, февралĕн 3-мĕшĕнче Мадрид сыхăхĕнчи фронтра Карабанчел секторĕнче пăлхавçăсем Мадрид çине артиллерирен [illegible] уса курса [illegible]. Артиллери [illegible] хире-хирĕç [illegible] пуçланă. Мадрид [illegible] пăлхавçăсем 30 снаряд [illegible] тата 10 [illegible] Франци посольстви [illegible] 100 метр [illegible] ÿкнĕ. Пĕр снаряд [illegible] кĕнĕ, анчах та çурăла кайман.

Лозоя секторĕнче (Мадридран çурçĕрелле) пăлхавçăсем республиканецсем [illegible] позицисене [illegible] тавăрма [illegible] пăхнă, анчах [illegible] аялла пулман.

ХĔВЕЛТУХАÇРИ (АРАГОНИРИ) ФРОНТ.

Гавас агентстви пĕлтернĕ тăрăх, [illegible] Синтра секторĕнчи (Теруэльрен çурçĕр хĕвеланăçĕнелле) пăлхавçăсене [illegible] вăхăтĕнче [illegible] пăлхавçăсем малти [illegible] Анчах та вĕсем [illegible] республиканецсем йышăннă территорине [illegible].

КĂНТĂРТИ ФРОНТ.

Барселонăран официаллă пĕлтернĕ тăрăх, Пеньярройă секторĕнче (Кордовăран çурçĕр хĕвеланăçĕнелле) пăлхавçăсем темиçе хутчен те атакăсем тунă, республикă çарĕсем вĕсене хирĕç хытăн [illegible] ытти пункчĕсенче республиканецсем [illegible] хавасĕсен çарĕсене хытăн хĕтĕрессĕ.

АВИАЦИ ĔÇĔ.

Гавас агентстви пĕлтернĕ тăрăх, пăлхавçăсем республикăллă Испанин хулисем çине бомбăсем пăрахма тата мирлĕ граждансене вĕлерме [illegible]. Февралĕн 2-мĕшĕнче пăлхавçăсем Уеска провинцинчи халăх [illegible] хутчен [illegible] тапăннă. Бомбăсем пăрахнипе сакăр çын вилнĕ тата 30 çын аманнă. Февралĕн 3-мĕшĕнче ирхине самолетсем Фигерас хули çине (Франци чикки тĕлĕнче) сирĕм бомбă пăрахнă. Тăхăр çын вилнĕ, 50 çын аманнă. Фигерас çине бомбăсем пăрахнă хыççăн, фашистсен самолечĕсем чикĕ урлă каçса Франци территорийĕ çийĕнче вĕçсе, тинĕс çинелле кайса çухалнă. Февралĕн 3-мĕшĕнче кăнтăрла „Пункере" йышши виçĕ самолет Реуса (Таррагони сывăхĕнче) тавралла 25 бомбă пăрахнă. Пĕр çын вилнĕ, икĕ çын аманнă. (ТАСС).

Хĕрлĕ Çарпа Тинĕс-Çар флочĕ 20 çул тултарнă йатпа ССР Союзĕн Çыхăну халăх комиссариачĕ йубилейлă маркăсен çерине кăларать. Çерире тĕрлĕрен хаклă сиччĕ маркă. В. В. Завйалов художник ескизĕсем тăрăх тунă маркăсем çинче: пехота боецĕ, танкист, краснофлотец, летчик, артиллерист ÿкерчĕкĕсем; М. Авилов художник ÿкерчĕкĕ тăрăх тунинче „Сталин йулташ 1-мĕш Утлă çара пыни" тата граждăн вăрçин геройĕ В. И. Чапайев. Маркăсем çинче: „СССР—20 лет РККА-1918—1938" тесе çырнă.

ÿКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: (Сулахайран сылтăмала): „Пехота боецĕ", „Летчик", „Краснофлотец", „Танкист" тата „Артиллерист" маркăсем.

Н. Олейник фото-ÿкерчĕкĕ (Союзфото).

Миаха генерал пĕлтерни

Миаха генерал пичет представителĕсене çапла пĕлтернĕ: Карабанчел секторĕнче республикă минисене сиктерсе салатса йанипе пăлхавçăсен казармине пĕтерсе хунă. Минăсене сиктерсе салатса йанă хыççăн республикă çарĕсем çар госпиталĕ сывăхĕнче чылай çуртсене йышăнса илнĕ. Çĕнĕ позицисем Бахо Карабанчелĕпе Альто Карабанчелĕнче пуçпулса тăма май параççĕ.

Пăлхавçăсем çухатнă позицисене кайала тавăрас тесе темиçе хутчен те хайаррăн атакăланă. Вăл атакăсене республикă çарĕсем сирсе пăрахнă.

(ТАСС).

Пăлхавçăсен пиратла ĕçĕсем

ЛОНДОН, февралĕн 3-мĕш (ТАСС). Кунта çакăн пек пĕлтерÿ илнĕ: Испани пăлхавçисем каллех Испани çыранĕнчен инçех мар Англин çĕр кăмрăкĕ тийенĕ икĕ карапне тытса чарнă.

Активиссене парти кандидатне илнĕ

БЫХОВ (Белорус ССР), февралĕн 2-мĕш. (ТАСС). Çак кунсенче Белоруççи К(б)П Быхов райкомĕ Аслă Совет депутатне („Завет Ильича" колхозри стахановкăдойаркăна С. С. Йевменовă йулташа парти кандидатне илнĕ.

Парти кандидатне çавăн пекех тата Илйич йачĕпе тăракан кантăк заводĕнчи стахановеца Новиков йулташа, Ново Быховри шкул директорне—Чугунов комсомолеца, парткабинет çумĕнчи библиотекă пуçлăхне Кукушка йулташа илнĕ.

Белоруççи К(б)П Домановичск райкомĕ Аслă Совет депутатне Н. И. Сугоньака йулташа парти кандидатне илнĕ.

ТАМБОВ, февралĕн 2-ш. (ТАСС) Пĕрремĕш Утлă Çар йачĕпе тăракан хĕрлĕ йалавлă кавалери училищинчи парторганизаци йанвар уйăхĕнче 19 чи лайăх комсомолеца ПСК(б)П кандидатне илнĕ. ПСÇЛКС комитечĕн членне Йефремов комсомолеца, Сидоров, Пасс комсомолецсене тата суйлав участкисенче агитатор пулса ĕçленĕ тата халь те агитаци ĕçне туса пыракан ытти активлă общественниксене партине илнĕ.

Училищăри комсомол организаци ПСÇЛКС ретне 25 çамрăк курсанта илнĕ. Вĕсен хушшинче отличниксем—Бабурганов, Будников, Панасенко йулташсем т. ыт. те пур.

Коньки пе чупмалли Пĕтĕм Союзри ăмăрту пуçланнă

Февралĕн 3-мĕшĕнче Мускавра коньки пе чи лайăх чупакансен Пĕтĕм Союзри ăмăртувĕ пуçланнă.

Мускаври 233-мĕш шкулта вĕренекен Зойа Холщчевникова 500 метр хушăна 50,8 секундăра чупса тухса хĕрсем хушшинче Пĕтĕм Союзĕпе çĕнĕ рекорд тунă.

Çамрăксем чупмалли 500 метр хушăна Мускав çамрăкĕ А. Мельников 47,5 секундăра чи малтан чупса тухнă. Виçĕ километр хушăна Мускав çынни Курбатов малтан тухнă.

Ăмăрту тăватă кун хушши пырать. (ТАСС).

Совет Союзĕ тăрăх

Иртнĕ çулта Тинĕс-Çар флочĕн Ленинградри тĕп музейне 125 пин çын пырса курнă. Хĕрлĕ Çарпа Тинĕс-Çар флочĕ 20 çул тултаракан йубилей çывхарса килнĕ май, йулашки кунсенче музейпа тата ытларах интересленме пуçланă. Музейра, ытти експонатсен хисепĕнче, тăшман карапĕсемпе çапăçнă вăхăтра совет морйакĕсем çĕнтерÿлĕн туртса илнĕ трофейсем сыхланса усранаççĕ (карап сăмсине çакакан йалав, торпедă, Англин „Л-55" йатлă шыв айĕн çÿрекен кимĕ чанĕ, вăл кимĕне совет морйакĕсем 1919 çулхи ниулĕн 4-мĕшĕнче шыва путарнă т. ыт.).

◆◆ Февралĕн 3-мĕшĕнче Калинин хулинче рабкорсемпе йалкорсен облаçри канашлăвĕ хупăннă. ПСК(б) Парти Тепкомĕн йанварти Пленумĕн итогĕсем çинчен тунă доклада канашлува пухăннисем пысăк активлăхпа сÿтсе-йавнă. Канашлу рабкорсемпе йалкорсене вĕрентес тĕлĕшпе кирлĕ ĕçсем туса ирттерме палăртна.

◆◆ Горький йачĕпе тăракан культурăпа кану Тĕп паркĕ тунă „Папанинецсен лагерĕ" выставкăна Мускаври ĕççыннисем 30 пин çын ытла пырса курнă. Выставкă курма пынисем польусра хĕлкаçакан хăйулă çынсен палаткине пысăк интереспа пăхнă, вăл палаткăна куçса çÿрекен пăр çинчи пекех тунă.

◆◆ Февралĕн 14-мĕшĕнче вырăссен чаплă композиторĕ А. С. Даргомыжский çурални 125 çул тултарать. Ленинградри Салтыков-Щедрин йачĕпе тăракан халăх библиотеки ку йубилейе композитора асăнса уçнă выставкăпа палла тăвать.

◆◆ Днепропетровск облаçĕнчи алăсталăх кооперацийĕ колхозсемпе МТС-сене пысăк пулăшу парать. Слесăрсен, хăмăт-йĕвен йусакансен, атă-пушмак çĕлекенсен. Парикмахерсемпе çĕвĕçсен 400 бригади ытла колхозсене тухса кайаççĕ. Çав бригадăсем 200 пин мăшăр ытла атă-пушмак тата 1,5 мĕлйун тенкĕлĕх автомашинă скачĕсене, ут кÿлмели хатĕрсене т. ыт. йусаса параççĕ.

(ТАСС).

Ÿсет районри пичет

Парти Обкомĕ йышăннă тăрăх 1930 çулта Çĕрпÿ, Канаш, Вăрнар, Патăрйел, Йетĕрне тата Улатăр районĕсенче пичетленекен хаçатсем тухма пуçларĕç.

1930 çулта кĕркунне „Канаш" редакци çумĕнче районри хаçатсенче ĕçлекен работниксем хатĕрлеме икĕ ернелĕх курс уçрĕç. Ку курсран 10—12 çын вĕренсе тухса районсене ĕçлеме саланчĕç.

Вăл вăхăтра районсенче типографисем пулман. Çĕрпÿре, Йетĕрнере тата Улатăрта тухакан хаçатсем çеç хăйсен типографисенче пичетленеччĕç. Вăрнар тата Патăрйел районĕсенчи хаçатсем ун чухне Улатăрти типографире пичетленнĕ.

Çăмăл марччĕ вăл вăхăтра хаçат кăларма. Улатăр хули Вăрнартан 150 километрта. Хаçат валли хатĕрленĕ заметкăсене Улатăрти типографине „васкавлă çырупа" йараттăмăр. Апла пулин те виçĕ кунтан тин вырăна çитетчĕ. Подписчиксем пичетленĕ хаçата та кĕтсе илейместчĕç. Хаçат Улатăртан иккĕмĕш йе виççĕмĕш кунта çеç Вăрнара çиткелечченĕ.

Редакци работникĕсем пуйăса кĕтме станцине тухатчĕç. Хăшпĕр чухне тата йатарласа хаçат кăлармă кайнă работник хăйĕнпе пĕрле илсе килетчĕ.

Вăрнарта типографи пулман пирки хаçат вăхăтра тухайман. Материалсем киевелсе тухнă. Подписчиксем кăмăлсăр пулатчĕç.

Вăл вăхăтра редакци райĕçтăвком мунчинче вырнаçнă пулнă.

Пурнăç кашни çулах улшăнса, лайăхланса пырать. Вăрнарта халь пиллĕкĕмĕш çул ĕнтĕ типографи ĕçлет. Пĕр вăхăтра кунта районти „Социалисăм çулĕпе", МТС политпайĕн „Колхозник" тата фосфорит завочĕн „Фосфорит" хаçатсем тухса тăратчĕç. Електричествăпа вăйĕпе ĕçлекен машинă хаçатсемсĕр пуçне ытти заказсене те сахал мар пичетлет.

Халь районта „Социалисăм çулĕпе" хаçат 9-мĕш çул, Кольцовкăри Сталин йачĕпе тăракан колхозри пуçмай тиражлă „Сталинец" хаçат 4-мĕш çул тухса тăраççĕ. Кусемсĕр пуçне тата кун сиктерсех радиохаçат тухса тăрать.

Çакăн пек ĕнтĕ Сталинла Конституци паракан пичет ирĕклĕхĕ. Пичет ирĕклĕхне чăн-чăнах пурнăçа кĕртсе пыма парти, совет влаçĕ ĕççыннисене хут, типографи, мĕн пур оборудованисем парать.

Д. Обофоров.

Клуба йапăхтарнă

Кив Тутайкассинчи (Сĕнтĕрвăрри р.) колхоз клубĕ иртнĕ çулганпа ĕçлет. Йалсовет клуб валли çак çулшăн 170 тенкĕлĕх тĕрлĕрен хаçат-журнал çырăнса пачĕ. Анчах хаçат-журналсене тупса вулама хĕн. Клуб пуçлăхĕ Иванов хăйĕн ĕçĕпе сахал интересленет, час-часах клуба хупă лартать. Кунта кружоксем ĕçлемеççĕ. Стена хаçачĕ тухмасть. Библиотекăра та колхозниксемпе йединоличниксене илсе вулама йурăхлă кĕнекесем сахал. Шашкă-шахмăт, домино, биллиард туйанман. Çавăн пек ĕçленипе йулашки вăхăтра клуба йапăхтарса йачĕç.

Г. Смирнов.

Тĕрĕс мар ответ паракансем пирки

Йанварĕн 28-мĕшĕнче тухнă „Колхозник йалавĕ" хаçатра Йĕпреç районĕнчи Епеç йал çынни С. Федотов вăрманта ĕçлекен колхозниксене ĕçкунĕн йе укçан шутласа парасси çинчен ыйтни çине ответленине пичетлесе кăларнă. Мĕнле пуçпа, кам çырни пирĕншĕн паллă мар. Анчах çакă паллă: çавнашкал тĕрĕс мар ответсем пама пурнăçран йулнă, хамăр çĕршывра куллен пулса пыракан улшăнусене курман, политик тĕлĕшĕпе мăка çынсем çеç пултараççĕ.

ССР Союзĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ „Вăрман хатĕрлекен организацисемпе колхозсем хушшинчи çыхăнусем" çинчен 1937-мĕш çулхи февралĕн 16-мĕшĕнче йышăннă постановлени тăрăх, колхозниксем вăрманта ĕçленĕ ĕçукçине колхоза тÿлес, çавăн пекех тата колхозниксене вăрманта ĕçленĕшĕн колхозран ĕçкунĕсем парас йĕркене пăрахăçа каларнă. Ун вырăнне вăрман хатĕрлекен организацисем кашни уйрăм колхозникě ĕçлев килĕшĕвĕ тăрăх ĕçукçи тÿлемеле тунă. Лашасемпе ĕçленĕшĕн, колхозсемпе килĕшнĕ тăрăх, ĕçукçин сахал пайне колхоза тÿлемеле.

Ку ыйтупа йанварĕн 9-мĕшĕнче тухнă „Чăваш Коммунĕ" хаçатра пичетленĕ „Квартал планне вăхăтра тултарассишĕн" статйара çителĕклĕ ăнланмала çырнăччĕ.

„Колхозник йалавĕ" хаçат редакцийĕ Мускаври, çавăн пекех республикăра тухакан хаçатсене те вуламасть иккен.

СПОРТ

Йетĕрне хулинчи йĕлтĕрçĕсен иккĕмĕш ăмăртувĕ

Йанварĕн 30-мĕшĕнче Йетĕрнере хĕллехи спорт сезонĕ пуçланнăранпа йĕлтĕрçĕсен иккĕмĕш ăмăртувĕ пулса иртрĕ. Ăмăртува педучилищă, йалхуçалăх техникумĕ тата хулари вăтам шкул командисем хутшăнчĕç.

Хĕрарăмсем 3 тата 5 километр тăршшĕ ăмăртса чупрĕç. Арçынсем 10 тата 20 километр хушăна ăмăртса чупрĕç.

Виçĕ километра чи малтан Петерина й. чупса тухрĕ, унăн вăхăчĕ 22 минут та 2 секундă. Иккĕмĕш вырăна Шчетинина йышăнчĕ (23 минут та 10 секундă).

5 километр чупмалли ăмăртура пĕрремĕш вырăна Зименовă (34 минут та 34 секундă), 2-мĕш вырăна Шалтамашевă (35 мин. 40 сек.) йышăнчĕç.

Арçынсен ăмăртувĕнче (10 километр) пĕрремĕш вырăна Башкиров (вăтам шкул) тухрĕ, унăн вăхăчĕ 55 минут та 47 секундă, 2-мĕш вырăна Громов йышăнчĕ (56 мин. 8 сек.).

20 километр: 1-мĕш вырăн—Новиков—2 сехет те 37 секундă, 2-мĕш вырăн—Никонов—2 сехет те 8 минут та 10 секундă.

Ăмăртура мала тухакансене премисем пачĕç.

И. Ижейев.

СУД

Вут тĕртнĕшĕн

Йатман йалĕнчи (Тутăркас р.) йединоличник Н. Алексейев хăйĕн тăванĕсенчен уйăрălса тухнă. Уйăрălса тухнă чух ăна шăлнĕ пÿрт паман пулнă. Н. Алексейев шăлнĕ çине тарăхса çÿренĕ, ăна йунанă. Çапла тарăхса çÿренĕ хыççăн вăл шăлнĕн—И. Алексейевăн пÿртне вут тĕртет. Икĕ кил çунса кайать.

1938 çулхи йанварĕн 25-мĕшĕнче Тутăркас районĕнчи халăх сучĕ çак ĕçе вырăна пырса пăхса тухнă хыççăн Н. Алексейева 5 çул хушши хупса усрамала тата унтан çунса кайнă пÿрт хуçисене: Золотовă—2710 тенкĕ, И. Алексейевă—1300 тенкĕ шырăса илмеле турĕ.

К. Пушкин.

КИТАЙРИ ВĂРÇĂ

СУРÇĔР КИТАЙРА

ХАНЬКОУ, февралĕн 3-мĕшĕ (ТАСС). Йулашки кунсенче Тяньцзинь—Пукоу чукунçулĕн çурçĕр участкинче Цзинин районĕнче çапăçусем чарăннă. Йапони çарĕсем шо се çулĕ тăрăх Цзининрен Шаньсянь йеннелле наступлени туса пыраççĕ. Вĕсем Гуйдере Лунхай чукунçулĕ çине тухса, Çучжоу хулине çавăрса илесшĕн тăрăшаççĕ. Анчах та Китай çарĕсем Йапони çарĕсен наступленине тытса чарса тăраççĕ. Ĕнентерсе калакан сведенисем тăрăх, йанварĕн 23-мĕшĕнче партизансем Цзинин хулине пырса кĕнĕ те Йапони хуралне вĕлерсе пĕтернĕ. Цзининре Йапони салтакĕсем пин çынна йахăн шутланаççĕ, вĕсен сакăр танк тата çирĕм тупă пур.

Хальхи вăхăтра Çуйчжоу хулине хÿтлени Китай халăхне ирĕке кăларас тĕлĕшпе пыракан вăрçăн чи паха тапхăрĕ пулса тăрать.

ХАНЬКОУ, февралĕн 3-мĕшĕ. (ТАСС). „Дагунбао" хаçат корреспонденчĕ çапла пĕлтерет: икĕ кун çапăçнă хыççăн, февралĕн 1-мĕшпе 2-мĕшĕнче Китай çарĕсем Суййуань провинцинчи Аньбей хулине илнĕ. Йапонецсем тунă „Çĕнĕ администрацине" вĕлерсе пĕтернĕ. Йапонипе Монголи çарĕсен салтакĕсене пурĕ 100 çын тыткăна илнĕ. Çав çарсен икĕ полкĕ командирсемпе пĕрлех китайецсем йенне тарса каçнă.

ЛОНДОН, февралĕн 3-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентствин Шанхайри корреспонденчĕ пĕлтернĕ тăрăх, февралĕн 3-мĕшĕнче ирхине йапонецсем Чифу хулине (Шаньдун провинцин çурçĕрпе хĕвелтухăç пайĕнчи порт хули) йышăнса илнĕ. Китай çарĕсем Чифу хулинчен темиçе ерне кайала тухса кайнă пулнă.

Йапонин çар карапĕсем Чифуна пырса йакăр йарса лартнă та десант антарса хăварнă.

ВАТАМ КИТАЙРА

ХАНЬКОУ, февралĕн 3-мĕшĕ. (ТАСС). Тяньцзинь—Пукоу чукунçулĕн кăнтăр участкинче таттисыпписĕр çапăçусем пыраççĕ. Ерне тăршшĕпех икĕ йенчен те подкрепленисем илсе тăраççĕ. Китай çарĕсем Цихе йатлă йухăншыв тăрăхĕпе вырнаçнă. Йапони çарĕсем Китай çарĕсемпе хире-хирĕç тăрса тытăçса çапăçассинчен пăрăнаççĕ. Кунта Йапони артиллерийĕпе самолĕчĕсем пысăк активлăх кăтартаççĕ. Йапони самолĕчĕсем кашни кунах Китай позицисем çине бомбăсем пăрахаççĕ.

Февралĕн 2-мĕшĕнче Йапони çарĕсем, пĕр дивизи чухлĕ подкреплени илнĕ хыççăн, Линьхуайгуаньре (Фын-Йанран çурçĕрпе хĕвелтухăçнеле) Китай позицисем çине, çавăн пекех тата Диньуань çине (Фын-Йанран кăнтăрала) наступлени тума пуçланă. Йапони çарĕсемпе Китай çарĕсем хушшинче хайар çапăçусем пулса иртнĕ, вăл çапăçусем пĕр кун кунĕпех пынă.

Февралĕн 1-мĕшĕнче йапонецсем Шаньдун провинцин хĕвелтухăç пайĕнче, Циндаоран 150 километр кăнтăрпа хĕвеланăçнеле, икĕ çар карапĕ çинчен десант антарма хăтланнă. Анчах та Китай çарĕсем йапонецсем çине пулеметсенчен пеме пуçланă. Темиçе çын çухатса, Йапони морйакĕсем хăйсен карапĕсем çине таврăннă. Çĕрле карапсем тинĕсе тухса кайнă. Февралĕн 1-мĕшĕнче Йапони салтакĕсем (пурĕ 600 çын), грузовиксемпе кайакансем, Çуаньчанран сакăр километрта партизансемпе тĕл пулнă. Партизансем, йапонецсем çине пулеметсенчен персе сасартăк тапăнма пуçланă, Йапони салтакĕсем çине гранатăсем пăрахнă. Çакăн хыççăн Йапонин 50 салтак вилнĕ. Йапонецсем, контрнаступленийе куçса, партизансене хĕсме пуçланă. Партизансем тусем патнеле чакнă. Çав вырăнсенче икĕ сехет хушши тытăçса çапăçнă хыççăн, йапонецсем каллех 40 çынна йахăн çухатнă. Пĕтĕмĕшпе партизансем йапонецсенне вунă грузовик тĕппипех пĕтерне, икĕ пулемет, икĕ грузовик тата темиçе винтовкă туртса илнĕ.

ЙАПОНИ АВИАЦИН ĔÇĔСЕМ

ХАНЬКОУ, февралĕн 3-мĕшĕ. (ТАСС). Февралĕн 2-мĕшĕнче Йапонин тăватă самолечĕ Хулишань форчĕ çине (Амойа патĕнче—Фуцзйань провинци) бомбăсем пăрахнă. Пурĕ тăхăр бомбă пăрахнă. Февралĕн 2-мĕшĕнче ирхине Йапонин пĕр бомбардировщикĕ Çуйчжоури Çурçĕр вокзалĕ çине тăватă бомбă тата унти складсем çывăхне тăватă бомбă пăрахнă. Февралĕн 1-мĕшĕнче Йапони авиацийĕ Нинбо çине (Чжецзйан провинци) икĕ хутчен пырса пурĕ 17 бомбă пăрахнă, вокзал çывăхĕнче 80 çурта йахăн ишĕлтерсе антарнă.

ХРОНИКА

—ССР Союзĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ В. С. Молоков йулташа Граждăнла сывлăш флочĕн Тĕп Тытăмĕн начальникĕ пулма çирĕплетнĕ.

Ответлă редактор ĕçĕсене тăваканĕ И. П. ПАВЛОВ—ПИНЕР.

Шупашкар хулинче ирĕкре хуçасăр çÿрекен йытăсемпе кĕрешесси çинчен

Рабочисемпе Хресченсен тата Красноармейецсен депутачĕсен Шупашкар Хула Совет президиумĕ 1938 çулхи йанварĕн 8-мĕшĕнче йышăннă

Обйазательнăй постановлени

Вырăнти советсем тата ĕçтăвакан комитетсем обйазательнăй постановлени кăларассипе вĕсене пăсакансем çине административлă йĕркепе взыскани хурасси çинчен 1931 çулти мартăн 30-мĕшĕнче тухнă положенин 4-мĕш статйинчи 3-мĕш параграф тăрăх тата РСФСР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ 1928 çулхи октйаберĕн 1-мĕшĕнче йышăннă постановлени тăрăх, Рабочисемпе Хресченсен тата Красноармейецсен депутачĕсен Шупашкар Хула Совет президиумĕ çапла йышăнать:

1. Йытăсем усракан пур граждăнсене, учрежденисене, предприйатисене, хуçалăхсене тата организацисене, çак постановлени вăйа кĕнĕ хыççăн 10 кун хушшинче, Шупашкар Хула Совечĕн финанс пайĕнче хăйсен йыттисене регистрацилеме тата кашни йытă валли мăй çумне çакма регистрацилĕ номĕрсем илме хушас.

2. Ирĕкре хуçасăр çÿрекен йытăсене тытмала тата пĕтермеле. Хуçасăр йытăсен шутне çаксем кĕреççĕ: мăйĕнче регистрацилĕ номĕр пулмасан, йе вĕсене сăнчăрпа, чĕлĕрпе кăкармасăр, сăмсалăхсăр урама кăларсан.

Асăрхаттарни 1: Мăй сыххисĕр тата регистрацилĕ номĕрсĕр çÿрекен лайăх ăратлă тата службăлă йытăсене, карантинра хупса тытнă хыççăн, Хула Совечĕн коммуналлă пайĕ вĕсене государствăн интересленекен органĕсене, общественнăй организацисене пама тата сутма пултарать.

Асăрхаттарни 2: Сурт йĕре хураллама сăнчăрта усракан йытăсен хуçисене кăнтăрла (ирхине 6 сех. пуçласа каçхине 8 сех. çитиччен) йытăсене сăнчăрпа кăкарса хума тата хапха çумне картăшĕнче сăнчăрта тăракан хайар йытă пурри çинчен çырса çапма хушас.

3. Йытăсем урса кайни паларсан, йытă хуçисем йе вĕсен хуçи вырăнĕнче пурăнакан çынсем тивĕçлĕ мерăсем йышăнма ун çинчен çав вăхăтрах хулари ветеринари пунктне пĕлтермеле тата ветеринари врачĕ пыриччен урса кайнă йытăсене хупса усрамала.

4. Урса кайни палăрнă йытăсене, уйрăм хаклă йытăсемсĕр пуçне, пурне те вĕлермеле. Урса кайнă пирки вĕлернĕ йе хăй вилнĕ пулсан, йытăсен тирĕсене сÿме йурамасть. Вĕсене тирĕпе пĕрле çав вăхăтрах пĕтермеле, пытармала. (ССРС Ветеринари уставĕн 11 тата 12 ст. ст.).

5. Хула Совечĕн Коммуналлă пайне хулара ирĕкре хуçасăр çÿрекен йытăсене саккунсем тăрăх йышăннă йĕркесемпе тытассине тата пĕтерессине организацилеме хушас. Хулара хуçасăр çÿрекен йытăсене çын сывлăхĕшĕн хăрушă майсемпе (пашалпа персе т. ыт. те) тытма йурамасть.

6. Çак обйазательнăй постановленийе пăсакансене административлă йĕркепе 100 тенке çити штраф тÿлеттереççĕ йе 1 уйăх çити йусанмалли ĕçре ĕçлеттереççĕ.

7. Çак обйазательнăй постановленийе мĕнле пурнăçланине сăнаса пырассине Хула Совечĕн Коммуналлă пайĕ, хулари ветеринари пункчĕ тата милици çине хурас.

8. Пичетре тухнă хыççăн икĕ ернерен çак обйазательнăй постановлени вăйа кĕрет те икĕ çула çити пырать.

Рабочисемпе Хресченсен тата Красноармейецсен депутачĕсен Шупашкар Хула Совет председателĕн ĕçĕсене тăваканĕ

Каплун.

Хула Совечĕн секретарĕн ĕçĕсене тăваканĕ **Кобозова.**

Пулни-иртнисем

ТРАК. Çак кунсенче Чиканар йалĕнчи чылай вăхăт хушши вăрттăн пытанса ĕçленĕ вăрăсен шайккине тытнă. Шайкăра 4 çын, мĕн ĕлĕкренпех вăрă ĕçĕпе пурăннăскерсем, тăнă. 4 уйăх хушшинче вĕсем Трак районĕнчи йалсенче колхозниксенне 7 кĕлет çаратнă. Шайкăра Григорйев Лука, Митрофанов Алексей, Петров Йегор, Тимофейев Семен пулнă. Вĕсене арĕслесе ĕçĕсене пăхса тухма халăх сучĕ аллине панă.

Академи театрĕнче

Февралĕн 6-мĕшĕнче
Вырăсла спектакль
ЛАВРЕНЕВ
„РАЗЛОМ"
4 пайлă
Режиссор С. С. Мартагин лартать.
Художник Йе. Н. Сапожников.
Балетмейстер М. Д. Йаницкайа.
Талон №-102.

Февралĕн 9, 10-мĕшĕнче
М. ГОРЬКИЙ
„НА ДНЕ"

Февралĕн 11, 14, 15, 17, 18-мĕшĕнче
ШЕКСПИР
„ОТЕЛЛО"

спектакльсене лартаççĕ. Ку спектакльсене курма билетсем малтанах илсе хума пулать. Коллективлăн илсен йÿнĕрех.

Кассă 3 сехетрен уçă.

„Чăваш коммунĕ" çырăнса илмелли хаксем; 12 уйăха—30 т., 6 уйăха—15 т., 3 уйăха—7 т. 50 пус; 1 уйăха—2 т. 50 пус. Алçырăвĕсене кайала памаççĕ.

Уполномоченный Чувашглавлита № 65. Гор. Чебоксары, Типография № 1 Чувацолиграфтреста. Заказ № 83. Тираж 15,00 52—94 см. 1—1 п. л.